Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТАБĔР 26 ЙУНКУН 247(5060) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухаť. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—1—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйăн — 6—23.

„Седов" пăрçĕмрен

Капитан Бадигина Парторг Трофимăва

Пăрсем хушшинче куçса çÿреме пуçланăранпа пĕр çулталăк тултарнă тĕле Сире тата „Седов" пăрçĕмренĕн пĕтĕм екипажне хĕрÿлĕ салам йаратпăр. Совет çыннисен болъшевикла çирĕплĕхĕпе Есĕр хăвăр çул çинчи мĕнпур йăвăрлăхсене сирсе йарса, тăван çĕршыва çĕнтерÿçĕсем пулса таврăнасса шанса тăратпăр.

Сирĕн алăрсене чăмăртатпăр, йулташсем!

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хушнипе:

И. СТАЛИН.
В. МОЛОТĂВ.

Государствăна çĕрулми парса татасси—пайанхи вирлĕ задачă

Кунран-кун тĕрекленеççĕ пирĕн колхозсем. Болъшевиксен партийĕпе совет правителствин колхоз хресченĕшĕн тăрăшса ĕçлеççĕ, ăна çĕнĕ, пуйан, културăлă пурнăç тума пулăшаççĕ. Пирĕн колхозсемпе колхозниксем йалхуçалăхĕнче продуктăсем тăвакан тĕп вайсем пулса тăчĕç. Вĕсем хăйсен обйазателствисене пурнăçласа государствăна тырă, çĕрулми, пахча-çимĕç, йĕтĕн, кантăр т. ыт. продуктăсем тăратаççĕ.

Государствăна продуктăсем тăратас ĕçре йединоличниксен тÿпи сахал, анчах апла пулсан та вĕсене хисепрен кăларса пăрахма çук. Вĕсене государствă умĕнчи хăйсен обйазателствисене вăхăтра тултарттармала тăвас пулаť.

Йалхуçалăх продуктисем хатĕрлесси хуçалăх кампанийĕ кăна мар, вăл пысăкран та пысăк политикăлă кампани пулса тăраť. Государствă интересĕсене колхозсемпе колхозниксен интересĕсенчен уйăрма çук. Колхоз пурнăçĕн пирвайхи заповĕдне—рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви умĕнчи обйазателствăсене тÿрĕ кăмăлпа тултарса пырасси—колхозниксен пуйан та културлă пурнăçне малала чечеклентерсе пырассин кирлĕрен те кирлĕ условийĕ пулнă, вăл малашне те çаплах пулаť. Оппортуниссемпе халăх тăшманĕсем кăна колхозниксен интересĕсене государствă интересне хирĕç тăратасшăн. Çавăнпа та государствăна тырă, çĕрулми т. ыт. йалхуçалăх продуктисем тăратас, машинă-трактăрлă станцисем ĕçлесе панишĕн натурплатă тырри тÿлес, государствăран кивçен илнĕ тырăсене тавăрса парас ĕçсенчен пăрăнса йулма тăни пулмала мар.

Политикăлă-хуçалăхлă кампанисенче руководителсем болъшевикла ĕçлеме пултарни, вĕсем пирĕн партин Сталинла Тĕп Комитечĕпе Совет правителстви кăтартса панисене пурнăçлассишĕн кĕрешме пĕлни тĕрĕсленет.

Пайанхи куна çакăн пек пысăк кампанисенчен пĕри—государствăна çĕрулми тăратас плана тултарасси пулаť. Анчах, çак ĕç пирĕн республикăра ытла та начар пыраť. ССРС Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн республикăри тата районсенчи уполномоченнăйсен аппаратĕ ответлăха туймасăр ĕçленине пула, октаберĕн 24-мĕшне государствăна çĕрулми тăратас плана пурĕ те 37,1 процент кăна тултарнă.

Чăваш республикĕнчи кашни ĕççыннине çакă паллă пулса тăмала: епĕр хатĕрлекен çĕрулмирен чылайĕшĕ Мускава кайаť. Хĕрлĕ столицă Мускав—пирĕн аслă тăван çĕршывăн чĕри. Мускаври рабочисем, ĕççыннисем йаланах социалисăм çĕнтерессишĕн, хамăр çĕршывра пуйан та културлă пурнăç тăвассишĕн кĕрешекенсен малти ретĕнче пыраççĕ.

Пирĕн республикăри кашни колхозникăн, кашни ĕççыннин пайанхи тивĕçлĕ те чыслă задачĕ вăл—государствăна çĕрулми тăратас плана хăвăрт тата пĕтĕмпех тултарасси пулаť.

Партипе правителствă Мускав валъли çĕрулми тийесе йама йулашки срук октаберĕн 25-мĕшне кăтартса пана. Çав вăхăтрах октаберĕн 24-мĕшне Мускав валъли çĕрулми хатĕрлес плана 34,5 процент, тийесе йарас плана 22,2 процент кăна тултарнă.

Ку таранччен государствăна çĕрулми тăратмали плана тултарас ĕç уйрăмах Пăрачкав, Кувакинă, Канаш, Шăмăршă, Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче начар пынă.

Çĕрулми йышăнакан базăсем: Вăрмар (управъайушчи Сергейĕв), Хĕрлĕ Чутай (управъайушчи Петров) ку тарана çитсе те хатĕрленĕ çĕрулмирен Мускава пĕр тоннă та тийесе йаман. Çавăн пекех Мускава çĕрулми тийесе йарас йенĕпе ĕçсем Куславккапа Канаш базисенче те начар тăраççĕ.

Пирĕн республикăра сахал мар малта пыракан колхозсем государствăна йалхуçалăх продуктисене вăхăтра тата ăнăçлăн тăратас ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартса пыраççĕ. Çавăн пек, Вăрнар районĕнче октаберĕн 24-мĕшне 45 колхоз государствăна çĕрулми тăратас плана тултарнă. Анчах чылай колхозсем çакăн пек лайăх ĕçленĕ вăхăтрах, çав Вăрнар районĕнчех тата кайа йулса пыракан колхозсем те пур. Çавăн пек, Малтикасри „Пĕрлешÿ" колхоз (колхоз председателĕ Николайĕв), Шанарпуçĕнчи, Çĕн Йахакассинчи, Тури Куганарти колхозсем государствăна пĕр центнĕр çĕрулми те паман. Чылай районсенче государствăна çĕрулми тăратас плана тултарас ĕçрен пăрăнса тăракан йединоличниксем те сахал мар. Çакăн пек чăтма çук йĕркесĕрлĕхе халех пĕтерес пулаť.

Государствăна хирĕçле туртăма çĕмĕрсе, государствăна çĕрулми тăратас плана кашни колхоз, кашни колхозникпе йединоличник хуçалăхĕ тăрăх çак кунсенче тултармала тăвас пулаť. Государствăна çĕрулми тăратас плана тултарса, çĕрулмине Мускав валъли тийесе йарас плана та çак кунсенче тултармала.

Колхозсенчен, йалсенчен государствăна план тăрăх тăратмали çĕрулмисене базăсене илсе тухма район центрĕсенчи, колхозсенчи пĕтĕм грузовой автомашинăсене мобилизацилес пулаť.

Партипе совет организацисен çак ĕçсене политикăлă-массăлă ĕçсене анлăн сарса йанипе туса пымала. Колхозниксемпе йединоличниксен массисене çĕрулми хатĕрлевĕ хамăр тăван çĕршыв ĕçĕшĕн мĕн пек пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен ăнлантарса памала, вĕсене çĕрулми хатĕрлев планне çак кунсенче тултармала тума мобилизацилемеле.

Хатĕрлев пункчĕсем ĕçлекен районсенчи партипе совет организацисен хатĕрлев пункчĕсен ĕçĕсене, вĕсем Мускава çĕрулми тийесе йарас ĕçе мĕнле туса пынине уйрăм контроле илмеле. Çĕрулми хатĕрлекен пунктсенче пĕр черет те ан пултăр, леçме пыракан колхозниксем çĕрулмине çийĕнчех пушатса хăвармала пултăр. Районсенчи партипе совет организацисен çĕрулмине складсенче лайăх сыхласа усрас ĕçе организацилемеле, çĕрулмине суртлама тата ăна Мускав валъли вăхăтра тийесе йама базăсене çителĕклĕ таран ĕç вăйĕ тупса памала.

Чăваш республикĕнчи парторганизацисен пирĕн партин Тĕп Комитечĕпе Совет правителствин директивĕсене пурнăçа кĕртессишĕн болъшевикла кĕрешме пултарнине кăтартас пулаť. Чăваш болъшевикĕсен, ĕççыннисен тивĕçлĕ те чыслă ĕçĕ—çĕрулми хатĕрлессипе ăна Мускав валъли тийесе йарас плана çак кунсенче тултармала тăвассишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешесси пулаť.

„Седов" пăрçĕмрен

Пĕлтĕр октаберĕн 23-мĕшĕнче Лаптевсен тинĕсĕнче виçĕ пăрçĕмрен: „Садко", „Малыгин" тата „Седов" хĕл каçса куçса çÿреме йулнă. Çав пăрçĕмренсем куçса çÿресе Çурçĕрти Пăрлă океан çине ишсе тухнă. Пăрçĕмренсем çинчи çынсенчен 184-шне пирĕн хăйулă лъотчиксем иртнĕ хĕлле илсе тухнă, карапсем çине тата 33 çын йулнă пулнă.

Кăçал çентаберĕ уйăхĕнче „Ермак" пăрçĕмрен „Малыгин" тата „Садко" пăрçĕмренсене пăрсем хушшинчен илсе тухнă. „Седов" пăрçĕмренĕн ирĕксĕрех тепĕр хĕл каçма йулмала пулнă, мĕншĕн тесен унăн руълне тытса пымали вăйлăн çĕмĕрĕлнĕ пулнă. „Ермак" та винтăсем хуçăлнă пирки, „Седов" пăрçĕмрене буксира илме пултарайман.

„Седов" пăрçĕмренĕн екипажĕ патне „Ермак" çинчен 9 çын анса йулнă. Вĕсем пурте хĕл каçма йулма кăмăл тунă.

Центр Арктикăри пăрсем хушшинче куçса çÿреме 15 çын йулнă, вĕсен капитанĕ—комсомолец Константин Бадигин йулташ.

„Седов" пăрçĕмренĕн хăйулă екипажĕ йаланах аслă лăх ĕçĕсене туса пыраť. Арктикăн нихçан карапсем ишсе курман районĕсем çинчен астрономи, гидрографи тата ытти çавăн пек питĕ те кирлĕ йапаласем çинчен пĕрмайах Мускава пĕлтерсе тăраť.

Халъхи вăхăтра „Седов" пăрçĕмрен 84-мĕш параллел тĕлĕнче, вăл кăнтăр-хĕвеланăç йеннеле куçса пыраť. Пĕр çулталăк хушшинче пăрçĕмрен пин çурă миле йахăн куçнă.

„Седов" пăрçĕмренĕн коллективĕ куçса çÿреме тытăннăранпа иккĕмĕш полъарнăй каçа кĕрет. Пăрсем хушшинче хĕл каçма тата унта нумай вăхăт хушши пурăнма кирлисем екипажăн пурте çителĕклĕ.

„Седов" пăрçĕмрен паттăрăн куçса пынине пĕтĕм çĕршыв, партипе правителствă тата Сталин йулташ тимлĕн асăрхаса тăраççĕ. (ТАСС).

„Родина" екипажĕ Мускава таврăннă тĕле

Аслă халăхăн хĕрĕсем

Мухтавлă героинъăсем Валентинă Гризодубăвă, Полинă Осипенко тата Маринă Расковă Мускава таврăнаççĕ. Социалисăмлă тăван çĕршывăн хăйулă хĕрĕсене, Сталин йулташ йачĕпе пĕр лармасăр вĕçсе хĕрарăмсем халиччен нихăçан туман вĕçеве пурнăçа кĕртнĕскерсене, пирĕн пĕтĕм аслă халăх хĕрÿлĕн ала çупса саламлаť. Вĕсем 26 сехет те 29 минут хушшинче маршрутпа 6.450 километр, тÿрĕ линипе шутласан—5.947 километр вĕçнĕ, çапла вĕсем пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен авиацири чи пысăк рекорчĕсене те кайа тăратса хăварнă.

Америкă лъотчици Амелийа Ерхарт, вăл Лăпкă Океан урлă вĕçсе каçнă чух пĕтнĕ, типĕ çĕр çийĕпе вĕçмели самолъот çинче тÿрĕ линипе инçене вĕçсе тунă рекордран 6 çул хушши тĕнчери пĕр хĕрарăм та иртсе кайайман пулнă. Вăл 1932 çулта Лос-Анжелосран Нъйу-Йорка çитиччен пĕр лармасăр вĕçсе тухса, 3.939,2 километр тăршшĕ çул тунă. Кăçалхи çул çак çитĕнÿрен Франци лъотчици Йелизаветă Лион иртсе кайнă, вăл 4.100 километр вĕçнĕ, унтан Франци лъотчици Дÿпейрон 4.360 километр вĕçнĕ. Франци лъотчици Дÿпейрон тунă рокорда совет лъотчицисем хыçала тăратса хăварчĕç.

Гризодубăвă, Осипенко тата Расковă йулташсен вĕçевĕ çакна тата тепĕр хут пит лайăх кăтартса пачĕ: Совет çĕршывĕн чи Инçетри-Хĕвелтухăçри вырăнĕсем те халъ ĕнтĕ инçетре мар. Ерешмен карти пек çăра сывлăш çулĕсем çĕршывăн чĕрине Владивостокпа та, Кербипе те, Камчаткă çинчи Петропавлăвскпа та, Хабаровскпа та, тăван çĕрĕн пĕтĕм пункчĕсемпе çыхăнтарса тăраççĕ.

Мăнаçлă йат—„Родина" йат панă самолъотăн геройла рейсĕ совет патриотисăмĕн çĕнĕ манифестацийĕ пулса тăчĕ. Социалисăм çĕршывĕн хăйулă хĕрĕсем, совет çынни хăй çĕршывĕн мухтавне темиçе хут ÿстерес тесе, унăн хăватне тĕреклетес тесе çав тери паттăр ĕçсем тума пултарнине кăтартса пачĕç.

Гризодубăвă, Осипенко тата Расковă вĕçевĕнче—Совет авиаци техникин хăвачĕ, Совет Сойузĕн оборонă тĕрекĕ пĕр пăркаланмасăр çирĕпленсе пыни уççăн курăнса тăраť. Гризодубăвă, Осипенко, Расковă йулташсем пек çынсем пирĕн пиншерĕн, вĕсем пурте пĕрремĕш хут чĕнсенех сывлăша вĕçсе çĕкленме, тăшмана хирĕç çапăçăва хутшăнса, ăна пуçĕпех çапса салатма хатĕр тăраççĕ.

Питĕ те чаплă калана Полинă Осипенко:

— Тăшман кирек мĕн чухлĕ нумайăн пулсан та, вăл кирек ăçтан килсе тухсан та тата кирек ăçтан тапăнсан та ăна епĕр хăйĕн территорийĕ çинче çапса çĕмĕрĕпĕр. Çĕршыв хушсассăн, партипе правителствă хушсассăн, пирĕн хĕрарăмсем упăшкисемпе пĕрле, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе пĕрле хамăрăн мухтавлă та йуратнă руководител Совет Сойузĕн пĕрремĕш Маршалĕ Клим Ворошилăв йертсе пынипе тăшмана тивĕçлĕ отпор парĕç.

„Родина" самолъотăн мухтавлă екипажĕ çинчен чунтан савăнмасăр калаçма май çук. Вăл—Октаберти Социалисăмлă Аслă революци хĕрарăмсене мĕнле анлă çул уçса панине кăтартса паракан чĕрĕ тĕслĕх. Героинъăсем Мускав—Инçет-Хĕвелтухăç маршрутпа вĕçни вăл—совет хĕрарăмĕн ÿсĕмĕ çинчен калакан чаплă пример. Авиатăр хĕрĕ—граждăнла авиаци пилочĕ Валентинă Гризодубăвă, колхозницă пулнă çар лъотчици Полинă Осипенко, музыкант учителницă хĕрĕ—штурман Расковă—çакăн пек ĕнтĕ „Родина" самолъотăн екипажĕ.

Совет лъотчицисем инçе çула тухса кайнă. Вĕсем пĕтĕм халăх кирек хăш минутра пулăшма хатĕр тăнине, кирлĕ пулсан пулăшу парассине лайăх пĕлнĕ. Вара, нумай вăхăт пĕлĕтсем, тĕтресем хушшинче пулнă хыççăн, пăрланнипе çапăçнă хыççăн, бензин пĕтсен самолъот тайгари Керби çывăхĕнче анса ларсан, „Родина" самолъот екипажне шырама çар самолъочĕсемпе граждăнла самолъотсем 50 ытла вĕçсе тухрĕç. Новосибирскран пуçласа Охотск тинĕсĕн çыранĕсем патне çити сарăлса выртакан калама çук пысăк территори çинче шыранă. Унта пурăнакан çынсем, красноармейецсемпе охотниксем тайгана хыпашланă, пекех пăхса тухнă темеле. Виçĕ совет героинине лъотчиксем Сахăрăвпа Бурлаков хăйулăн та паттăрăн шыранă. Йереминпа Полежайĕв парашÿтиссем героинъăсем патне чаплăн сиксе аннă. Унтах тата Тихăнăв врач парашÿтпа сиксе аннă. Дукири контролълă пунктăн метеорологĕ Полъаков „Родина" самолъот патне çуран пырса çитнĕ.

Инçет-Хĕвелтухăç пуйăсĕ пирĕн героинъăсене Мускава илсе килнĕ çул—аслă чукунçул магистралĕ—триумфла çул пулса тăчĕ. Гризодубăвă, Осипенко тата Расковă йулташсене кашни станцăрах, кашни çурма-станцăрах ăшă саламлă сăмахсем кĕтнĕ, тăван çĕршыв патриочĕсен чечекĕсем, хĕрÿлĕ йурату сăмахĕсем кĕтнĕ.

Гризодубăвă, Осипенко тата Расковă патне Сталин тата Молăтăв йулташсем ала пусса йанă телеграммăра пĕтĕм çĕршывăн туйăмне пит те чаплă каласа панă:

„Вĕçнĕ чухнехи тата анса ларнă чухнехи йăвăртан та йăвăр условисенче палăрнă Сирĕн хăйулăх, лăпкăлăх тата вĕçеври чаплă маçтăрлăх пĕтĕм совет халăхне савăнтарса тĕлĕнтерет".

М. В. Водопйанăв,
Совет Сойузĕн Геройĕ.
(ТАСС).

Словаки правителствин реакцилĕ ĕçĕсем

Словаки правителстви саккун пройектне туса хатĕрлет. Çав пройектра йулашки çулсем хушшинче облăçа куçса пынă 40 пин йеврейе Словакинчен халех кăларса йама палăртнă. Братиславра çĕнĕрен уçакан университета йеврей халăхĕсене илмеле мар тăваççĕ. „Автономлă Словаки тума палăртнă" программăра чехсен нацинчен тăракан служăщисене пурне те ĕçрен тата Словакирен кăларса йама палăртса хунă. Çавăн пекех 1918 çул хыççăн куçса пынă йеврейсене те пĕтĕмпех Словакирен кăларса йама палăртнă. (ТАСС).



ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (сулахайран сылтăмала) „Родина" самолъот штурманĕ аслă лейтенант-орденоносец М. М. Расковă тата иккĕмĕш пилот, капитан-орденоносец П. Д. Осипенко Мускав çывăхĕнчи Медвежйе кÿлли цатĕнче (1938 çулти çентаберте ÿкернĕ).

Н. Ралъцевич фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Çĕрулми хатĕрлевĕ

Йалсоветсене пулăшма

ВĂРНАР, октаберĕн 25-мĕш. (Телефон тăрăх). Вăрнар районĕ çĕрулми хатĕрлес тĕлĕшпе ку таранччен çителĕклĕ ĕçлеймен. Пайанхи куна плана 50 проц. йахăн çеç тултарнă. Пурĕ 10.654 центнĕр хатĕрленĕ. Хатĕрленĕ çĕрулмине пĕтĕмпех Мускава йанă.

Районра 45 колхоз çĕрулми хатĕрлев планне пĕтĕмпех тултарнă. Çав вăхăтрах 4 колхозра пĕр центнĕр та пухман. Малтикассинчи „Пĕрлешÿ" (председателĕ Николайĕв йулташ), Шăнарпуçĕнчи тата Мăн Куганар колхозĕсем çĕрулми хатĕрлес тĕлĕшпе халĕ те ĕçе тытăнман.

Районăн татах 11.553 цент. çĕрулми хатĕрлемеле. Ăна епĕр виçĕ кун хушшинче тултарма шутлатпăр. Парти райкомĕпе райĕçтăвком йалсоветне тата колхозсене пулăшас майпа пайан районти активран 34 çын йалсене йачĕ.

ИГАРĔВ,
ССРС Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ.

400 лав черетре тăнă

ИШЛЕЙ. Районри колхозсемпе йалсоветсем государствăна çĕрулми тăратас плана октаберĕн 20-мĕшне 37 процент çеç тултарнă. Уйрăм колхозсем государствăна çĕрулми парас йенĕпе тăрăшса ĕçлерĕç. Сăмахран, „Париж коммунĕ", „Акара", „Трудовик", „Хĕрлĕ плуг" колхозсем, çавнашкалах çав колхоз членĕсем те çĕрулми парса татнă.

„Верный путь", Калинин тата К. Маркс йачĕсемпе тăракан колхозсем государствăна çĕрулми тăратас йенĕпе йулса пыраççĕ. Ишлей разйесĕнчи çĕрулми илекен пункт начар ĕçленине уйрăмах çирĕп палăртмала. Унта çĕрулми йышăнакансем пулман пирки октаберĕн 25-мĕшĕнче Шупашкарпа Ишлей районĕсенчи колхозсенчен пынă 400 лав иртен пуçласа каçченех кĕтсе тăнă. Чылай лавсем çĕрулмине памасăрах кайала кайнă. Ку ĕçре, паллах, ССР Сойузĕн Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйĕ, çавнашкал Ишлей районĕнчи уполномоченнăйĕ айăплă. Вĕсен çĕрулми илекенсене вăхăтра хатĕрлемеле пулнă.

Çакăн пек çитменлĕхе халех пĕтермеле. Çĕрулмине пĕр чăрмавсăр илсе тăмала тăвас пулаť.

ЧИНКОВ.

Хăвăртрах парса татас пулаť

Тутаркас районĕ государствăна çĕрулми памали обйазателствăна октаберĕн 20-мĕшне 88 процент ытларах тултарнă. Районри пур колхозсем те çĕрулми парса татнă. Çав хушăрах государствăна çĕрулми парас тĕлĕшпе колхозниксемпе йединоличниксем йулса пыраççĕ.

Йункă, Чуманкасси тата Турай йалсовечĕсене уйрăмах палăртса хăварас пулаť. Ку йалсоветсем государствă умĕнчи обйазателствăсене тултарас йенĕпе йапăх ĕçлеççĕ.

Турай йалсоветĕнчи колхозниксен государствăна 195 центнĕр, йединоличниксен—33 центнĕр, Чуманкасси йалсоветĕнче—колхозниксен 281 цент., йединоличниксен—25 цент., Йункă йалсоветĕнче—колхозниксен—250 центнĕр, йединоличниксен—25 центнĕр памала. Çавнашкалах ытти йалсоветсенчи йединоличниксем те государствăна пахча-çимĕçсем, çĕрулми парас тĕлĕшпе васкамаççĕ-ха.

Орининăри „Хĕрлĕ Сормăвă" колхоз членĕсем государствăна пахча-çимĕçсем тата çĕрулми пĕтĕмпех парса татнă.

Тутаркас районĕнчи колхозниксемпе йединоличниксен государствăна çĕрулми памали обйазателствăна вăхăтра тултарассишĕн кĕрешмеле.

Обйазателствăсене вăхăтра тултармала

Уйкас Йунтапари (Трак р.) „Çĕнĕ пурнăç" колхозра ĕçсене начар туса пычĕç. Акă, çĕрулмине уйран йапăх кăларса пуçтарса кĕнĕ. Кашни 100 центнĕр çĕрулмирен 13 центнĕр çĕр айне йулнă. Пайанхи кунччченех государствăна çĕрулми парса татман. Ку тĕлĕшпе колхоз председателĕ, бригадирсем те васкамаççĕ-ха.

Колхоз авăн çапса пĕтерни чылай пулаť. Унтанпа МТС-не натурплатă тыррине парса татма май пулнă. Апла пулсан та, 900 пăтран çуррине йахăн çеç панă.

„Çĕнĕ пурнăç" колхозăн государствă умĕнчи обйазателствăсене вăхăтра тултарассишĕн çине тăрса ĕçлемеле.

А. У[illegible]ов.

Пур ĕçре те пример кăтартаť

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствин пĕрремĕш участкинчи Гаврилинă йулташ бригадинче 4 çын. Пурте вĕсем хăйсен нормисене ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен бригадă пур ĕçре те плана йалапах 115—130 процент таран тултарса пыраť.

Бригада членĕсем Октаберти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнă уйава татах та лайăхрах ĕçленипе кĕтсе илес тесе пĕр-пĕрин хушшинчи ăмăртăва сарсах пыраççĕ. Халъхи вăхăтра бригада тăм çăрнă çĕрте ĕçлет. Кашни çынна уйрăм ĕç уйăрса пани тухăçлă ĕçлеме май туса параť, пурте тăрăшса ĕçлеççĕ.

Хар. Лисин.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин

ИСТОРИЙĔ

КĔСКЕ КУРС.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

IV-мĕш сыпăкăн малали

2. Диалектикăлă тата историлĕ материализмăн çинчен*)

Истори пилĕк тĕслĕ тĕп производствăлă хутшăнусем пĕлет: первобытнăй-обшчинăлă, рабовладельчески, феодальнăй, капиталисăмлă, социалисăмлă хутшăнусем.

Первобытнăй-обшчинăлă строй вăхăтĕнчи производствăлă хутшăнусен никĕсĕ—производства средствисем обшчĕствăлă харпăрлăх пулса тăни пулать. Çакă вăл тĕпрен илсен çак тапхăрти производительнăй вăйсен характерĕпе килĕшсе тăрать. Чул хатĕрсем, кайран пуçланса кайнă ухă тата çĕмренсем çынна природă вăйĕсене тата тискер кайăксене хирĕç пĕччен кĕрешме май паман. Çынсен выçлăхпа вилес мар тесен, тискер кайăксем йе кӳршĕри обшчĕствăсем тапăннипе вилес мар тесен, вăрманта çимĕçсем пухма, шывра пулă тытма, мĕнле те пулин çурт тума пĕрле ĕçлемеле пулнă. Пĕрле ĕçлени производства средствисем, çавăн пекех производствăн продуктисем те, пĕрлехи харпăрлăх пулса тăрасси патне илсе пырать. Кунта, производствăн хăшпĕр хатĕрĕсем, çав вăхăтрах тискер кайăксенчен сыхланса тăмали хатĕрсем пулса тăраканскерсем, уйрăм çынсен харпăрлăхĕ пулса тăнине шутламасан, производства средствисем уйрăм харпăрлăх пулса тăни çинчен пĕлмеççĕ-ха. Кунта експлуатаци çук, классем çук.

Рабовладельчески строй вăхăтĕнчи производствăлă хутшăнусен никĕсĕ—производства средствисем, çавăн пекех тата производствăн работникĕ—чура рабовладелец харпăрлăхĕ пулса тăни пулать; рабовладелец чурана, выльăха сутнă пекех, сутма, сутăн илме, вĕлерме пултарать. Çавăн пек производствăлă хутшăнусем тĕпрен илсен çав тапхăрти производительнăй вăйсен состойанийĕпе килĕшсе тăраççĕ. Чултан тунă хатĕрсем выранне халĕ çынсен аллинче металлран тунă хатĕрсем пулнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине те, çĕрĕçне те пĕлмен чухăн тата примитивлă ухута хуçалăхĕ выранне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси, çĕрĕçĕ, ремесласем, производствăн çав отраçлисем хушшинче ĕç пайланса тăни пулса кайнă, продуктăсене уйрăм çынсем тата обшчĕствăсем хушшинче улăштармали май, пурлăха сахал çынсен аллинче пухса пымали май, производства средствисене сахалтарахăшсен аллинче чăннипех пухса пырасси пуçланса кайнă, сахалтарахăшĕ нумайтарахăшне пăхăнтарса тăрас тата сахалтарахăшне чура туса хурас май пуçланса кайнă. Кунта ĕнтĕ производства процесĕнче обшчĕствăн пур членĕсем те пĕрле тата ирĕклĕн ĕçлени çук,—кунта чурасене ирĕксĕрлесе ĕçлеттерни пуçпулса тăрать, вĕсене ĕççыннимар рабовладелецсем експлуатацилесе тăраççĕ. Çавăнпа производствăн средствисем те, çавăн пекех тата производствăн продукчĕсем те, пĕрлехи харпăрлăх пулса тăни çук. Ун выранне уйрăм харпăрлăх йышăнса тăрать. Кунта рабовладелец пĕрремĕш тата чăннипех те тĕп собственник пулса тăрать.

Пуйансемпе чухăнсем, експлуататарсемпе експлуатациленекенсем, тулли правалисемпе правасăррисем, вĕсем хушшинчи хайар класлă кĕрешӳ—çавăн пек ĕнтĕ рабовладельчĕски стройăн картинĕ.

Феодальнăй строй вăхăтĕнче производствăлă хутшăнусен никĕсĕ—производствăн средствисем феодал харпăрлăхĕ тата производствă работникĕ—крепостной феодалăн тулли мар харпăрлăхĕ пулса тăни пулать, ăна феодал ĕнтĕ вĕлерме пултараймасть, анчах ăна вăл сутма тата сутăн илме пултарать. Феодал харпăрлăхĕпе йунашарах хресченпе ремесленникăн производствă хатĕрĕсемпе, хăйсен уйрăм хуçалăхĕн уйрăм харпăрлăхĕ пур, вăл харпăрлăх хресченпе ремесленник хăйсем ĕçлени çинче тытăнса тăрать. Çавăн пек производствăлă хутшăнусем тĕпрен илсен вăл тапхăрти производительнăй вăйсен состойанийĕпе килĕшсе тăраççĕ. Тимĕре шăратса тăвасси малала лайăхланса пыни; тимĕр плуг тата пир-авăр тĕртекен станок сарални; çĕрĕçĕ, пахча ĕçĕ, ерех тăвасси, çу тăвасси малала аталанни; ремесленнăй маçтерскойсемпе йунашарах мануфактурăлă предприйатисем пулса кайни,—çакăн пек ĕнтĕ производительнăй вăйсен состойанийĕн характерлĕ паллисем.

Çĕнĕ производительнăй вăйсем çакна ыйтаççĕ: работникĕн производствăра мĕнле те пулин пуçарулăх тата ĕç патне туртăнни, ĕçпе интересленни пулмала. Çавăнпа та феодал чурана, вăл ĕçпе интересленмен тата пачах та пуçарусăр работник пулнă пирки, пăрахать, крепостнойа ĕçлеттерессине мала хурать, крепостнойăн хăйĕн хуçалăхĕ, хăйĕн производствă хатĕрĕсем пур тата унăн çĕр ĕçлеме тата феодала хăйĕн тырринчен натурăпа тӳлемелĕх туса илес тесе интересленни пур.

Уйрăм харпăрлăх кунта малала аталанса пырать. Експлуатаци, чуралăхри пекех, пит те вăйлă—ăна кăшт çеç çăмăллатнă. Експлуататăрсемпе експлуатациленекенсем хушшинчи клас кĕрешĕвĕ феодальнăй стройăн тĕп палли пулса тăрать.

Капиталисăмлă строй вăхăтĕнче производствăлă хутшăнусен никĕсĕ—производства средствисем капиталисла харпăрлăх пулса тăни пулать; кунта производствă работникĕсем—кĕрĕшсе ĕçлекен рабочисем харпăрлăх пулса тăмаççĕ, капиталис вĕсене вĕлерме те, сутма та пултараймасть, мĕншĕн тесен вĕсем личнă пăхăнса тăрассинчен ирĕклĕ, анчах вĕсен производствă средствисем çук, çавăнпа та вĕсен ирĕксĕрех, выçса вилес мар тесе, хăйсен ĕç вăйне капиталиса сутма тата хăйсен ĕнси çинче експлуатаци пусмăрне йатса пыма тивет. Производствă средствисем капиталисла харпăрлăх пулса тăнипе йунашарах, крепостной пулса пăхăнса тăнинчен ирĕке тухнă хресченсемпе ремесленниксен производствă средствисен уйрăм харпăрлăхĕ пур, çак харпăрлăх малтанхи вăхăтра анлăн саралать, вăл хресченпе ремесленникăн хăйсен ĕçĕ çинче тытăнса тăрать. Ремесленнăй маçтерскойсем тата мануфактурăлă предприйатисем выранне машинăсемпе хĕçпăшалланнă пит те пысăк хапрăксемпе савăтсем пуçланса кайаççĕ. Хресчен производствин примитивлă хатĕрĕсемпе ĕçлесе тăнă дворйансен помеçтийĕсем выранне агротехникă кăтартнă тăрăх ĕçлесе пынă тата йалхуçалăх машинĕсемпе ĕçлекен шултра капиталисла економисем пуçланса кайаççĕ.

Çĕнĕ производительнăй вăйсем çакна ыйтаççĕ: производства работникĕсен тĕттĕм те ăнланусăр, крепостнойран ытларах культурăлă та ăнланулă пулмала, машинăна ăнланса илме тата унпа тĕрĕс усă курма пултаракан пулмала. Çавăнпа та капиталиссем—крепостной сăнчăрсенчен ирĕклĕ рабочисене машинăсемпе тĕрĕс усă курма çителĕклĕ таран культурăлă рабочисене ĕçлеттерессине мала хураççĕ.

Анчах, производительнăй вăйсене тем терийех аталантарса йарса, капиталисăм вăл хăй татса парайми хирĕçӳсем ăшĕнче çыхланса ларнă. Таварсене ытларах та ытларах туса кăларса тата таварсен хакне йӳнетсе пырса, капиталисăм конкуренцине çивĕчлентерсе йарать, вак тата вăтам уйрăм собственниксен массисене йухăнтарса пырать, вĕсене пролетарисем туса хурать тата вĕсен тавар илес пултарулăхне чакарса лартать, çавăн пирки туса кăларнă таварсене сутас майсем пĕтсе лараççĕ. Производствăна сарса пырса тата пит те пысăк хапрăксемпе савăтсенче рабочисене миллионĕ-миллионĕпе пухса, капиталисăм производствă процесне обшчĕствăлă характерлĕ туса хурать, çапла тунипе вара хăйĕн никĕсне ишĕлтерет, мĕншĕн тесен производствă процесĕн обшчĕствăлă характерĕ производствă средствисем обшчĕствăлă харпăрлăх пулса тăнине ыйтать, çав вăхăтрах производствă средствисен харпăрлăхĕ уйрăм капиталисла харпăрлăхах пулса йулать, вăл ĕнтĕ производствă процесĕн обшчĕствăла характерĕпе килĕшсе тăмасть.

Производительнăй вăйсен характерĕпе производствăлă хутшăнусем хушшинчи çак килĕштерейми хирĕçӳсем хăйсене перепроизводствă кризисĕсенче палăртаççĕ, ун чухне капиталиссен ирĕксĕрех, вĕсем хăйсемех йухăнтарнине пула халăх массисем тавар илсе укçа тӳлеме пултарайман пирки, продуктăсене çунтарма, хатĕр таварсене пĕтерме, производствăна чарса лартма, производительнăй вăйсене аркатма тивет, ун чухне темиçе миллион халăхсен ирĕксĕрех безработицăпа выçлăха,—таварсем çитмен пирки мар, таварсем ытла та нумай туса тултарнă пирки,—тӳссе пурăнма тивет.

Çакă вăл—капиталисăмлă производствăлă хутшăнусем обшчĕствăн производительнăй вăйĕсемпе килĕшсе тăми пулса, вĕсемпе килĕштерейми хирĕçĕве кĕрсе кайнине пĕлтерет.

Çакă вăл—капиталисăм революципе пĕтĕ пулнине пĕлтерет, вăл революци производствă средствисем хальхи капиталисăмлă харпăрлăх пулса тăни выранне социалисăмлă харпăрлăх туса хумала.

Çакă вăл—експлуататăрсемпе експлуатациленекенсем хушшинчи питех те çивĕчĕ класлă кĕрешӳ капиталисăмлă стройăн тĕп палли пулса тăнине пĕлтерет.

Социалисăмлă строй вăхăтĕнче,—ăна халлĕхе ССР Сойузĕнче кăна пурнăçа кĕртнĕ-ха,—производствăлă хутшăнусен никĕсĕ—производствă средствисем обшчĕствăлă харпăрлăх пулса тăни пулать. Кунта ĕнтĕ експлуататăрсем те, експлуатациленекенсем те çук. Туса кăларнă продуктăсене ĕç тăрăх: „кам ĕçлемест, вăл çимест", тенĕ принципа валеçеççĕ. Кунта çынсен производствă процесĕнчи хутшăнăвĕсем—експлуатацирен ирĕклĕ работниксем пĕр-пĕринпе йулташлă ĕçлесе тата пĕр-пĕрне социалисăмлă пулăшса хутшăннипе паларса тăраççĕ. Кунта производствăлă хутшăнусем производительнăй вăйсен состойанийĕпе пĕтĕмпех килĕшсе тăраççĕ, мĕншĕн тесен производствă процесĕн обшчĕствăлă характерне производствă средствисем обшчĕствăлă харпăрлăх пулни çирĕплетсе тăрать.

Çавăнпа та тапхăрĕ-тапхăрĕпе пулакан перепроизводствă кризисĕсене тата вĕсемпе çыхăнса тăракан киревсĕрлĕхсене ССР Сойузĕнчи социалисăмлă производствă пĕлмест.

Çавăнпа та производительнăй вăйсем кунта пысăк хăвăртлăхсемпе аталанса пыраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсемпе килĕшсе тăракан производствăлă хутшăнусем вĕсене çавăн пек аталанма тулли ирĕк параççĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ етемлĕх историн тăршшĕнче çынсен производствăлă хутшăнăвĕсем аталанса пынине кăтартакан картинă.

Çакăн пек ĕнтĕ производствăлă хутшăнусен аталанăвĕ обшчĕствăн производительнăй вăйĕсен аталанăвне, пуринчен ытла—производствă хатĕрĕсен аталанăвне пăхăнса тăни; çапла пăхăнса тăнине пула производительнăй вăйсен улшăнăвĕсемпе аталанăвĕсем малтан йе кайран производствăлă хутшăнусен тивĕçлĕ улшăнăвĕсемпе аталанăвĕсем патне илсе пыраççĕ.

„Йапаласемпе усă курса ĕç хатĕрĕсене *) туса пыни, тет Маркс, çакă вăл хăшпĕр выльăх-чĕрлĕхсен пуçламĕш формă чухлĕ пур пулин те, çын ĕç процесĕн уйрăмăнах характерлă йенĕ пулса тăрать, çавăнпа ĕнтĕ Франклин çынна ĕç хатĕрĕсем тăвакан чĕр-чун тесе палăртать. Шăмă йулашкийĕсен стройенийĕ вилсе пĕтнĕ тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕхсен организацине тĕпчесе вĕренме йепле паха, ĕç хатĕрĕсен йулашкийĕсем те пуранса иртернĕ обшчĕствăлă-економикăлă формацисене тĕпчесе вĕренме çавăн пекех паха пулса тăраççĕ. Економикăлă епохăсем пĕр-пĕринчен мĕн тунипе мар, мĕнле тунипе уйăрăлса тăраççĕ... Ĕç хатĕрĕсем çынăн ĕç вăйĕ аталаннин виçи кăна мар, тата ĕç пулса пынă чухнехи обшчĕствăлă хутшăнусене кăтартса параканни те пулса тăраççĕ" (К. Маркс. «Капитал», т. I, стр. 121, издание 1935 г).

Малала тата:

а) „Обшчĕствăлă хутшăнусем производительнăй вăйсемпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Çĕнĕ производительнăй вăйсем туйанса пырса, çынсем хăйсен производствă меслетне улшăнтараççĕ, производствă меслетне, хăйсен пурнăçне тытăнтарса тăмали меслете улшăнтарнă май,—вĕсем хăйсен обшчĕствăлă хутшăнăвĕсене пурне те улшăнтараççĕ. Аларманĕ сипре сюзерен (феодал.—Ред.) пуçпулса тăракан обшчĕствă парать, пăспа ĕçлекен арман — промышлĕннăç капиталисĕ пуçпулса тăракан обшчĕствă парать" (К. Маркс и Ф. Энгельс, т. V, стр. 364).

б) „Производительнăй вăйсен ӳсĕмĕ куçса пыни, обшчĕствăлă хутшăнусем ишĕлни, идейăсем пуçланни татти-сыпписĕр пулса пырать, куçса пынин абстракцийĕ çеç хускалмасăр тăрать" (савăнтах, стр. 364).

„Манифест коммунистической партии" кĕнекере каласа панă историлĕ материалисăма палăртса парса, Енгельс калать:

„Економикăлă производствă тата çак економикăлă производствăран пурпĕрех тухса тăракан кирек хăш историлĕ епохăри обшчĕствă стройенийĕ унăн политикăлă тата ăсхакăллă историн никĕсне тăвать... Çавна май авалхи обшчинăлă çĕр тытăмĕ ишĕлсе пĕтме пуçланă вăхăтранпа пĕтĕм истори обшчĕствăлă аталанăвăн тĕрлĕ пусăмĕсенчи кĕрешӳн историйĕ, експлуататациленекенсемпе експлуатацилекенсен хушшинчи, пăхăнса тăракан классемпе пуçпулса тăракан классем хушшинчи кĕрешĕвĕн историйĕ пулнă... Халĕ ĕнтĕ çав кĕрешӳ çакăн пек пусăма çитсе тăчĕ: кунта експлуатациленекен тата пусмăр тӳссе пурнакан клас (пролетариат), пĕр вăхăтра пĕтĕм обшчĕствăна експлуатацирен, пусмăртан тата клас кĕрешĕвĕнчен йаланлăхах хăтармасăр, хăйне експлуатацилекен тата пусмăрлакан класран (буржуазирен) хăтăлма пултараймасть..." („Манифестăн" нимĕç изданийĕ валли Енгельс çырнă умсăмах).

Производствăн виççĕмĕш уйрăмлăхĕ вăл акă мĕнре тăрать: производительнăй вăйсем тата вĕсемпе килĕшсе тăракан производствăлă хутшăнусем кивĕ стройран уйрăм мар, кивĕ строй пĕтсе ларнă хыççăн мар, кивĕ строй ăшĕнче çуралса тухаççĕ, çынсем малтанах пĕлсе тунă, ăстăнлă ĕçе пула мар, стихийлă, пĕлмесĕр, çынсен ирĕкĕнчен килмесĕрех пулса пыраççĕ. Вăл икĕ сăлтав пирки стихийлăн тата çынсен ирĕкне пăхăнмасăр пулса пырать.

Пĕрремĕшĕнчен, çак сăлтавпа: çынсем вăл йе ку производствă меслетне суйласа илме ирĕклĕ мар, мĕншĕн тесен кашни çĕнĕ ăру пурнăçа кĕнĕ чух иртнĕ ăрусен ĕçĕн резульгачĕ пулса тăракан производительнăй вăйсемпе производствăлă хутшăнусене хатĕррипех тĕл пулать, çавна пула унăн пирвайхи вăхăта производствă тĕлĕшĕнчи мĕнпур хатĕр йапаласене пĕтĕмпех йышăнмала тата материаллă ырлăхсем тума май илмĕ вĕсемпе майлашăнса пурăнмала пулать.

Иккĕмĕшĕнчен, çак сăлтавпа: производствăн вăл йе ку хатĕрĕсене, производительнăй вăйсен вăл йе ку елеменчĕсене лайăхлатса пынă чухне, вăл лайăхлатусем мĕнле обшчĕствăлă резульгатсем патне илсе пырассине çынсем тавçăрса илеймеççĕ, ăнланмаççĕ, ун çинчен шухăшласа та тăмаççĕ, вĕсем хăйсен кулленхи интересĕсем çинчен çеç, хăйсен ĕçне çăмăллатса хăйсем валли мĕнле те пулин тӳрех туймали усă илесси çинчен шутлаççĕ.

Первобытнăй - обшчинăлă обшчĕствăн хăшпĕр членĕсем чулсенчен тунă хатĕрсенчен майĕпен тата хыпаласа туйнипе тимĕр хатĕрсем патне куçнă чух, вĕсем, паллах, çак çĕнетӳ мĕнле обшчĕствăлă резульгатсем патне илсе пырассине пĕлмен тата ун çинчен шухăшласа та пăхман, металлран тунă хатĕрсем патне куçни производствăра переворот тăвассине, вăл хăçан та пулсан рабовладельчески строй патне илсе пырассине вĕсем ăнланса, тавçăрса илмен,—вĕсем хăйсен ĕçне çăмăллатса çийĕнчех туймала усă илессишĕн çеç пулнă, — вĕсен ăстăнлă ĕçĕ çав хăйсен кулленхи усă илес тенин хĕсĕк рамкисенчен тухман.

Феодальнăй строй тапхăрĕнче Йевропăн çамрăк буржуазийĕ вак тĕвек цехла маçтерскойсемпе йунашарах шултра мануфактурăлă предприйатисем тума, çапла вара, обшчĕствăн производительнăй вăйĕсене малала аталантарса пыма тытăннă чухне, вăл, паллах, çак çĕнетӳ мĕнле обшчĕствăлă резульгатсем патне илсе пырассине пĕлмен тата ун çинчен шухăшласа та пăхман, çак „пĕчĕк" çĕнетӳ обшчĕствăн вăйĕсене тепĕр майлă йĕркелесе тăратасси патне, ку вара корольа влаçне хирĕç те,—унăн ырă кăмăлне вĕсем пит те хака хунă,—тата дворйансене хирĕç те,—вĕсен ĕретне лекме буржуазин чи лайăх представителĕсем сахал мар ĕмĕтленнĕ,—революци пулнипе пĕтесси патне илсе пырассине буржуази ăнланса, тавçăрса илмен,—вăл тавар туса кăларассине йӳнетессишĕн çеç, Азин тата халь кăна тупнă Америкăн рынăкĕсене нумайтарах таварсем кăларса, ытларах услам илессишĕн çеç пулнă,—унăн ăстăнлă ĕçĕ çав кулленхи практикăн хĕсĕк рамкисенчен тухман.

Вырăс капиталисĕсем йут çĕршыври капиталиссемпе пĕрле, патша влаçне тивмесĕрех хăварса тата хресченсене помешчиксем пусмăрласа тăмала туса, Российăра тимлесех кучухнехи машинăлă шултра промышлĕннăçа сарса пынă чухне, вĕсем, паллах, производительнăй вăйсем вăйлăн ӳсни мĕнле обшчĕствăлă резульгатсем патне илсе пырассине пĕлмен тата ун çинчен шухăшласа та пăхман, обшчĕствăн производительнăй вăйĕсем çавăн пек вăйлă сикĕм туни обшчĕствăн вăйĕсене тепĕр майлă йĕркелесе тăратасси патне, ку вара пролетариата хăй çумне хресченсене пĕрлештерсе, çĕнтерӳлĕ социалисăмлă революци тума май парасси патне илсе пырассине ăнланса, тавçăрса илмен, — вĕсем промышлĕннăç производствине тем пекех сарасшăн çеç пулнă, питех те пысăк шалти рынăка çавăрса илесшĕн монополиссем пуласшăн тата халăх хуçалăхĕнчен ытларах услам сăрхăнтарса илесшĕн çеç пулнă,—вĕсен ăстăнлă ĕçĕ кулленхи хĕсĕк практикăлă интересĕсенчен иртсе кайман.

Çакна май Маркс калать:

„Хăйсен пурнăçĕн обшчĕствăлă производствинче (урăхла каласан, çынсен пурнăçĕ валли кирлĕ материальнăй ырлăхсене тунă çĕрте.—Ред.) çынсем пĕр паллă, кирлĕ, хăйсен ирĕкĕнчен килсе тăман*) хутшăнусене—производствăлă хутшăнусене кĕреççĕ, вăл хутшăнусем вĕсен материальнăй производительнăй вăйĕсен аталанăвĕн пĕр-паллă пусăмĕпе килĕшсе тăраççĕ" (К. Маркс, Избранные произведения, т. I, стр. 269).

Çакă вăл паллах, производствăлă хутшăнусем улшăнни тата кивĕ производствăлă хутшăнусенчен çĕнни патне куçни тикĕс, конфликтсемсĕр, кисренӳсемсĕр пулса пынине пĕлтермест. Йалтах урăхла, çавăн пек куçасси йаланах кивĕ производствăлă хутшăнусене революцилĕ майпа сирпĕтсе антарса çĕнĕ производствăлă хутшăнусем туса хунипе пулса иртет. Паллă тапхăрччен производительнăй вăйсен аталанăвĕ тата производствăлă хутшăнусем тĕлĕшĕнчи улшăнусем стихийлă, çынсен ирĕкне пăхăнмасăр пулса пыраççĕ. Анчах çакă вăл паллă самантчен кăна, çуралса тата аталанса пыракан производительнăй вăйсем кирлĕ пек çитĕнсе çитиччен кăна пулать. Çĕнĕ производительнăй вăйсем çитĕнсе çитсен вара, халиччен тытăнса тăнă производствăлă хутшăнусем тата вĕсене илсе пыракансем—пуçпулса тăракан классем „çĕнсе илейми" чăрмав пулса тăраççĕ, вĕсене çул çинчен çĕнĕ классен ăстăнлă ĕçĕпе çеç, çав классен ирĕксĕрлекен ĕçĕпе, революципе çеç, сирсе ывăтма пулать. Кунта уйрăмах кивĕ производствăлă хутшăнусене вăйпа пĕтерсе хума пултаракан çĕнĕ обшчĕствăлă идейăсен, çĕнĕ политикăлă учрежденисен, çĕнĕ политикăлă влаçăн пит те пысăк ролĕ уççăнах палăрса тăрать. Çĕнĕ производительнăй вăйсемпе кивĕ производствăлă хутшăнусем хушшинчи конфликт никĕсĕ çинче, обшчĕствăн çĕнĕ економикăлă потребнăçĕсен никĕсĕ çинче çĕнĕ обшчĕствăлă идейăсем пуçланса кайаççĕ, çĕнĕ идейăсем массăсене организацилеççĕ тата мобилизацилеççĕ, массăсем çĕнĕ политикăлă çара пĕтĕçеççĕ, çĕнĕ революцилĕ влаç тăваççĕ, унпа производствăлă хутшăнусем тĕлĕшĕнче кивĕ йĕркесене вăйпа пĕтерсе хурас тата çĕнĕ йĕркесем туса çирĕплетес ĕçре усă кураççĕ. Аталанăвăн стихийлă процесĕ выранне—çынсен ăстăнлă ĕçĕ, мирлĕ аталану выранне—ирĕксĕрлекен переворот, еволюци выранне—революци тухса тăрать.

„Пролетариат, тет Маркс, буржуазине хирĕç пыракан кĕрешӳре пурпĕрех класа пĕрлешет... революци урлă хăйне пуçпулса тăракан клас туса хурать, вара, пуçпулса тăракан клас пулнипе, кивĕ производствăлă хутшăнусене вăйпах пĕтерсе хурать" («Манифест коммунистической партии», издание 1938 г., стр. 52).

Малала тата:

а) „Пролетариат хăй политикăлă пуçпулса тăнипе буржуазинчен, утăм хыççăн утăм туса, пĕтĕм капитала туртса илес, производствăн пĕтĕм хатĕрĕсене государствă аллинче, урăхла каласан, пуçпулса тăракан класа организациленнĕ пролетариат аллинче централизацилес, тата производительнăй вăйсен суммине мĕн май килнĕ таран ӳстерес ĕçре усă курать" (савăнтах, стр. 50).

б) „Ирĕксĕрлени вăл кирек мĕнле, кивĕ обшчĕствăшăн та, вăл çĕннипе пĕтĕленнĕ пулсан, папаç карчăкĕ пулса тăрать" (Маркс, „Капитал", т. I, стр. 603, 1935 г.).

Акă Маркс 1859 çулта хăйĕн „К критике политической экономии" йатлă чаплă кĕнекин историлĕ „умсăмахĕнче" историлĕ материалисăмăн ăшчикки çинчен панă генийле формулировкă:

„Хăйсен пурнăçĕн обшчĕствăлă производствинче çынсем пĕр-паллă, кирлĕ, хăйсен ирĕкĕнчен килсе тăман хутшăнусене—производствăлă хутшăнусене кĕреççĕ, вăл хутшăнусем вĕсен материальнăй производительнăй вăйĕсен аталанăвĕн пĕр-паллă пусăмĕпе килĕшсе тăраççĕ. Çак производствăлă хутшăнусем пĕтĕмпе пĕрле обшчĕствăн економикăлă структури, реальнăй никĕсĕ пулса тăраççĕ, çак никĕс çинче йуридически тата политикăлă надстройкă тытăнса тăрать, çав никĕспе обшчĕствăлă ăстăнăн паллă формисем килĕшсе тăраççĕ. Материальнăй пурнăç производствин меслетĕнчен социальнăй, политикăлă тата духовнăй пурнăç процесĕсем килсе тăраççĕ. Çынсен бытийине вĕсен ăстăнĕ мар палăртса тăрать, пачах урăхла, вĕсен обшчĕствăлă бытийи вĕсен ăстăнне палăртса тăрать. Обшчĕствăн материальнăй производительнăй вăйĕсем хăйсен аталанăвĕн паллă пусăмĕнче халиччен тытăнса тăнă производствăлă хутшăнусемпе, урăхла каласан, ку таранччен вĕсен ăшĕнче аталанса пынă харпăрлăх хутшăнăвĕсемпе хирĕçĕве кĕреççĕ,—производительнăй вăйсемпе харпăрлăх хутшăнăвĕсем хушшинчи хирĕçӳ производительнăй вăйсемпе производствăлă хутшăнусем хушшинчи хирĕçĕвĕн сăнне йуридически кăтартса тăраканни çеç пулса тăрать. Производительнăй вăйсен аталанăвĕн формисенчен çак хутшăнусем вĕсене аталанма чаракан сăнчăрсем пулса тăраççĕ. Çакăн чухне социальнăй революци епохи пуçланать. Економикăлă никĕс улшăннă май пысăкрах йе пĕчĕкрех хăвăртлăхпа мĕнпур пысăк надстройкăра переворот пулса иртет. Çавăн пек переворотсене пăхса тухнă чухне, производствăн економикăлă условисенче йестественнăнаучнăй тĕрĕслĕхне кăтартса паракан материальнăй переворота йаланах йуридически, политикăлă, тĕнлĕ, художĕствăлă йе философилĕ формăсенчен, кĕскен каласан: идеологи формисенчен уйăрса илни кирлĕ, çынсем вĕсенче çак конфликт пуррине ăнланса илсе, унпа кĕрешеççĕ. Йепле уйрăм çын çинчен вăл хăй çинчен мĕн шухăшлани тăрăх калама çук, çавăн пекех çавăн йевĕрлĕ переворот епохи çинчен те унăн ăстăнĕ тăрăх калама çук. Йалтах урăхла, вăл ăстăна материальнăй пурнăçăн хирĕçĕвĕсемпе, обшчĕствăлă производительнăй вăйсемпе производствăлă хутшăнусем хушшинче пулса пыракан конфликтпа ăнлантарса памала. Пĕр обшчĕствăлă формаци те унăн мĕнпур производительнăй вăйĕсем аталанса çитиччен пĕтмест, вăл вĕсене аталанма çителĕклĕ таран ирĕк парать, тата çӳлтерех тăракан çĕнĕ производствăлă хутшăнусем те нихăçан та кивĕ обшчĕствăн хăйĕн ăшĕнче вĕсене пурăнмали материальнăй условисем пулса çитиччен пуçланса каймаççĕ. Çавăнпа та етемлĕх хăйĕн умне хăй татса пама пултаракан задачăсене çеç лартать, мĕншĕн тесен çывăхрах пырса пăхсан, задачи хăй те йалан ăна татса памали материальнăй условисем пур пулсан çеç йе сахалтан та, вăл условисем пулса пынă вăхăтра çеç тухса тăни курăнать" (К. Маркс, Избранные произведения, т. I, стр. 269—270).

Çакăн пек тăрать ĕç марксислă материалисăм тĕлĕшпе, ăна обшчĕства пурнăçĕ, обшчĕства историйĕ йенĕпе усă курма илсен.

Çакăн пек ĕнтĕ диалектикăлă тата историлĕ материалисăмăн тĕп паллисем.

Çакăнтан вара Ленин ревизиониссен тата перерожденецсен тапăнăвĕсенчен мĕнле теорилĕ пуйăнлăха парти валли сыхласа хăварни, тата Ленинăн „Материализм и эмпириокритицизм" йатлă кĕнеки пичетленсе тухни пирĕн парти аталанăвĕшĕн йепле пысăк выран йышăнса тăни курăнать.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

---

*) „Диалектикăлă тата историлĕ материалисăм çинчен" уйрăмăн пуçламăшĕ „Чăваш Коммунĕн" 244, 245, 246-мĕш №-сенче пичетленнĕ.

*) „Ĕç хатĕрĕ" тесе, Маркс пуринчен ытла производствă хатĕрĕсене калать.—Ред.

*) Редакци курсивĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПСК(б)П хула комитетěнче

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечě отчотпа суйлав пухăвěсенче коммуниссем панă сěнÿсене мěнле пурнăçлани çинчен парткомсене парторгсен отчочěсене итлерě.

Çěрěç Халăх Комиссариатěнчи, Чебторгри, Чăвашсойузри тата ытти пуçламăш парторганизацисем коммуниссен сěнěвěсене çителěксěр пурнăçласа пымаççě. Çěрěç Халăх Комиссариатěнчи парторганизацие Федотăв йулташа, выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçре тăшмансен сатăрла ěçěсен йулашкисене пěтерес майĕ, конкретлă план тума çине пулнă. Ку плана тума тытăннă, анчах ăна пайан кунччен те вěçне çитермен. Çавăн пекех колхоссене пусуçăрвăйăшне йěркелес ěçе те питě йěрипен пулса пырать.

Парти ретне ÿстерес тěлěшпе те коммуниссем панă сěнÿсем тивěçлипе пурнăçланса пымаççě-ха. Чебторг çумěнчи пуçламăш парторганизаци 1938 çулта пěр çынна та парти ретне илмен, çавăн пекех сочувствующине те илмен. „Пирěн организацире 100 стахановец, 22 ударник", тет партком çекретарě Комиссарăв йулташ. Кунта комсомолецсем те пур. Ткаченко йулташ 1936 çултанпа сочувствующийччě тăрать. Анчах партин çак резервисемпе парторганизаци ěçлемест. Партине кěме панă зайавленисене те вăхăтра пăхса тухмаççě. Маркосăв йулташ 1932 çултанпа парти кандидачěччě тăрать. Пуçламăш парторганизаци ку ěçе 1938 çулта икě хут сÿтсе-йавнă. Ăна темиçе хут анкета çыртарнă тата ыт. те. Пěр самахпа каласан, Маркосăв йулташ 1936 çултанпа парти членне куçаймасăр пурăнать.

Кун çинчен хаçатра çырса кăларнă пулсан та Чебторгри пуçламăш парторганизаци нимěн те шарламаст-ха.

Çěрěç Халăх Комиссариачě çумěнчи пуçламăш парторганизаци те 3 çынна парти ретне илнипех лăпланса ларнă.

Ку пуçламăш парторганизацисем профсойуз организацисене йěртсе пымаççě. Чăвашсойузра начар ěçленěшěн местком салатса йарса, çěнě местком суйланă. Çěнě местком та питě çителěксěр ěçлет. „Пирěн 7 местком, вěсене никам та йěртсе пымаст", тет Чебторгри партком секретарě Комиссарăв йулташ. Çавăнпа та ěнтě ку организацисене профсойуз членěсем хушшинче политикăлла ěçе йěркелемен.

Суту-илÿ организацисене тăшмана элементсенчен тасатасси çинчен ПСК(б)П хула комитечě темиçе хут асăрхаттарнă пулсан та, парторганизацисем нумайěшě ку кăтартăва тивěçлипе пурнăçламаççě. Ку организацисене кадрсене ěçлени тăрăх мар, анкета тăрăх çеç пěлеççě. Çавăнпа та растратчиксем чакса пырас вырăнне, ÿссе пыраççě.

ПСК(б)П хула комитечě отчотпа суйлав пухăвěсенче коммуниссем панă сěнÿсене пуçламăш парторганизацисем халě те çителěксěр пурнăçланине палăртрě.

Пур пуçламăш парторганизацисене те отчотпа суйлав пухăвěсенче йышăннă решенисене тата коммуниссем панă сěнÿсене мěнле пурнăçлани çинчен парти пухăвěсенче сÿтсе-йавма хушрě хула комитечě.

ПСК(б)П историне вěренетпěр

Иртнě вěренÿ çулěнче Туçари (Йěпрес районě) туллимар вăтам шкулти учителěсем хушшинче ПСК(б)П историне вěренесси нимте йапăх пынă. Çавна пула программăна вěренсе пěтереймен. Пěлтěрхи çитменлěхсене шута илсе, кăçалхи çул учителěсем ПСК(б)П историйěн Кěске курсне çине тăрсах вěренме пуçларěç. Кашни учител „Красная Чувашия" хаçат илсе хатěрлерě. Хаçатри материалсемсěр пуçне тата Ленинăн, Сталинăн произведенийěсемпе усă кураççě.

Хамăрăн йуратнă коммунисем партин историне вěренни пире ачасене коммунисла воспитани панă çěрте питě те пулăшать. Çавна пула кăçалхи çул Туçари учителěсем ПСК(б)П историйěн Кěске курсне тěплěн вěренме хăйсен умне задачă лартрěç.

Г. Н. Прокопийěв.

Малта пыракан цех

Деткомиссин Шупашкарти хапракăн çăматăсем йăвалакан цехě мěн çулталăк пуçланнăранпах стахановла ěçлесе пырать. Вăл августăн 15-мěш тěлне çулталăкри плана 103 процент тултарнă.

Цеха выдвиженец Морушкин йулташ йěртсе пырать. Вăл, цех начальникě пулса ěçлеме тытăннăранпа рабочисен квалификацине ÿстерес, стахановла опытсене сарас йěнěпе пысăк ěçсем турě. Морушкин йулташ вěрентнě çăматă йăвалакан А. Старов йулташ халě нормăна йалан 160—170 процент тултарать. Комсомолец Пошугин йулташ та стахановла ěçлеме тытăнчě.

Çăматăсем йăвалакан цех Октябер уйавě умěнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн тата та пысăк ÿсěмсем тума пуçларě. Халě цехра нормăна тултарман рабочисем пачах çук.

И. Лукинский.

Парти вěренěвне йěртсе пырас ěçе вăйлатмала

ШĂХАСАН. Районра парти историне вěренес ěç саралсах пырать. Коммуниссем ăçта вěренмелине ПСК(б)П райкомě хăйěн ларăвěнче çирěплетрě. Анчах партире тăман колхозниксене, служăщисене политикăллă воспитани парас ěçе организацилемен-ха. Ку пысăк çитменлěх пулса тăрать. Вěсене ПСК(б)П историне, пуринчен ытла политграматăна вěренме хутшăнтармала.

Парти вěренěвне ПСК(б)П райкомě çителěклě йěртсе пырать темe çук. Ку ěçе пěтěмпех парткабинет çине йăвантарма пăхни курăнать. Занятисем йěпле пахалăхпа иртеççě, пропагандиссем парти историн сыпăкěсене тěрěс ăнлантараççě-и,—çак ыйтусемпе райком членěсемпе секретарěсем интересленмеççě. Калас пулать, вěсем районри кашни коммунис ПСК(б)П историн сыпăкěсене йěпле хăй тěллěн вуласа пынине çителěклě пěлмеççě. Политграматă шкулěсем çине те çавнашкалах çавăрăнса пăхмаççě.

Уйрăмăнах пропагандиссемпе ěçлессине илсе пăхар. Пропагандиссемпе сентябер уйăхěнче пěрер семинар туса иртернě (парти историне вěрентекенсемпе те, политграматă вěрентекенсемпе те). Малтанхи семинарта занятисене йěпле иртермели çинчен çеç каланă. Халě ун хыççăн ПСК(б)П историне вěрентекен пропагандиссене тепěр хут пăхса тухрěç, улшăнусем те пулчěç. ПСК(б)П историне вěрентекен пропагандиссемпе ěçлесси тěп вырăнта пулмала. Тěп задачă —пропагандиссем хатěрлесси, вěсене хăйсене парти историне тěплěн вěрентесси пулмала. Çак задачăна Шăхасан районěнче йěпле пурнăça кěртме шутлани паллă мар-ха.

Парти райкомě пропагандиссен семинарěсене иртермели 3 уйăхлăх плана çирěплетрě. Вăл план тăрăх октяберте парти историн 1-мěш сыпăкě тăрăх, нойаберте—II-мěш сыпăкě тăрăх, декеберте III-мěш сыпăкě тăрăх лекцисем тата консультацисем пулмала. Вăл семинарсем пěрер кунлăх çеç пулмала. Капла вара пропагандиссем парти историне хăйсем те вěренекенсемпе тан çеç вěренсе пыраççě. „Правда" хаçат кăтартнă тăрăх кашни пропагандисăн парти историне вěрентме пуçличчен малтан историн пěтěм сыпăкěсене хăйěн тěплěн вěренсе тухмала. Райком работникěсем: пропагандиссене курса пухма пирěн укçа çук, теççě.

С. Соколов.

Ěçсем лайăхлансах пыраççě

Шупашкарти Деткомиссии хапрăкě çумěнчи Осоавиахим организаци арканасси патнех çитнě пулнă. Член укçисене çулталăкěпех пуçтарман, оборонă ěçне йапăхтарса йанă. Осоавиахим членěсен билечěсене улăштарма тытăнас умěн Осоавиахимăн пуçламăш организацин советне çěнěрен суйласа лартнă хыççăн, организаци ěçě йăлтах улшăнчě. Оборонă ěçне чěртсе йарас йěнěпе пуринчен ытла совет председателě Буинцěв йулташ хытă тăрăшса ěçлеме пуçларě.

Деткомиссии хапрăкě çумěнчи Осоавиахим пуçламăш организаци Шупашкар хулинчи пуçламăш организацисенчен пуринчен малтан член билечěсене улăштарса пěтернě. Хальхи вăхăтра ку организацире 47 член, член билечěсене улăштарнă вăхăтра çěнěрен 17 çын кěнě. Осоавиахим членěсем пурте член укçи тÿлес йěнěпе хăйсен парăмěсене пěтěмпех тÿлесе татнă тата 1938 çулшăн та йăлтах тÿленě. Совет председателě Буинцěв йулташ—активлă комсомолец, хăйěн ěç нормине вăл йалан ирттерсе тултарса пырать, халě вăл парти ретне кěме хатěрленет.

Осоавиахимăн хула совечě туса иртерме палăртнă химилě ăмăртăва хапрăкри пěтěм коллектив хутшăннă.

И. Л.

— о —

Билетсене улăштарса пěтерчěç

Пединститутри Осоавиахим пуçламăш организацийě çулран çул ÿссе çирěпленет. Унта 600 член ытла шутланса тăрать. Осоавиахим организацийě пуçарса йанипе халě ПВХО значокě илме хатěрлекен кружоксем организацилерěç. Ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарнă уйава хатěрленнě май, оборонă кружокěсем лайăх ěçлеме пуçларěç. Уйав тěлне кашни студентах ПВХО тата „Ворошиловский стрелок" т. ыт. те оборонă значокěсем илме хатěрленеççě. Кăçал килнě студентсемсěр пуçне 400 студент ытла ПВХО значок нормисене панă, вěсенчен чылайěшě значоксене илнě. Тата ГТО значокě илме нормăсем пама занятисем ирттереççě. Физкультурăпа вěрентекен Филиппăв йулташ йěртсе пынипе гимнастикă секцийě организацилерěç. Халě Осоавиахим организацийě членсен кивě билечěсене улăштарса, çěнěрен кěнисене те Осоавиахим кěнекисем парса пěтерчě.

Йарукин.

Хаçатсене пăхса тухни

Массăллă оборонă ěçěсем çинчен

„Коммунисăм çулěпе" хаçат (Трак р.) сентябěрěн 21-мěшěнче **„Призыв пунктěнче"** йатлă статйара совет çамрăкěсем тăван çěршыва сыхлама йаланах хатěр тăни, вěсем Рабочисемпе Хресченсен Хěрлě Çар ретне пысăк хавасланхпа кайни çинчен çапла пěлтерет:

„Коминтерн" колхозри призывнике Николайěв йулташа льготă панă. Анчах Николайěв йулташ льготă илме килěшмест. „Мана льготă кирлě мар, епě тахçантанпах Хěрлě Çар ретне кайасшăн ěмěтленсе пурăннă, манăн ěмěт пайан пурнăça кěчě", тет Николайěв".

Призывниксен нумайěшěн ГТО, ПВХО, ГСО тата ворошиловла тěл перекенсен значокěсем пур, тесе çырать йулашкинчен хаçат.

Район призыва мěнле хатěрленни çинчен те, призыв мěнле иртни çинчен те „Коммунисăм çулěпе" çав Талхир заметкине пичетлесе кăларнисěр пуçне 1938 çулта оборонă ыйтăвěсем тăрăх нимěн те çырман.

Партин чăваш облаç организацин XIX-мěш конференцийěнче партин Трак райкомě тата райěçтăвком оборонă ěçě çине çителěксěр пăхнине хытă критикленěччě. Ку критикă тěрěс, вăл районти хаçата та хытă тивет. „Коммунисăм çулěпе" хаçат оборонă ыйтăвěсене çутатасси çинчен пачах манса кайнă. Хěрлě Çар кунěнче, Авиаци кунěнче тата çавнашкал уйавсенче çеç хаçатра оборонă ěçě çинчен çырнă статйасене тупса вулама пулать. Çав статйасенче те Совет Сойузěнчи ěçсем çинчен çеç асăнать, оборонă ěçě районта мěнле пыни çинчен çырма хаçат сăмах тупаймасть.

„Коммунисăм çулěпе" çеç мар, **„Хěрлě йалав"** (Вăрмар), **„Сталин йалавěпе** (Шăмăршă) хаçатсем те оборонă ыйтăвěсене çутатассинчен айакра тăраççě. **„Призыв пуçланчě", „Осоавиахим билечěсене улăштарассине лайăх ирттерер"**, тесе çырнисемсěр пуçне, çав хаçатсем те массăллă оборонă ěçě çинчен нимěн те çырмаççě.

Оборонă ыйтăвěсем çинчен çырмали материалсем районсенче çук ши мěн? Пирěн хаçатсем „кашни савăт, кашни хапрăк, кашни МТС, кашни колхоз ССР Сойузěн оборонă крепăçě пулмала" тенине асра тытса ěçлесен, оборонă ыйтăвěсем çинчен çырма темěн чухлě материал тупма пултараççě. Илер Осоавиахим организацине. Осоавиахим—массăллă оборонă ěçěн никěсě. Унăн ěççыннисене çар ěçне вěрентмели темиçе тěрлě кружоксем пур. Мěн тăваççě çав кружоксем? Осоавиахим организацин тата вăл организациленě кружоксен ěçěсене хаçатсен тăтăшах çутатса пымала. Лайăх ěçлекен организацисен, массăллă оборонă ěçěн организатăрěсен паха опычěсене çутатмала, начар ěçлекенсене критиклемеле. Халě çак ыйтусене районри хаçатсем пачах та çутатмаççě. Партипе комсомол организацисен, советсен, массăллă оборонă ěçне мěнле туса пыраççě-ха? Ку та хаçатсен куллен çутатса пымали чи кирлě ыйтусенчен пěри.

Ěççыннисем Совет Сойузěн оборонă тěрекне çирěплетес ěçе тěрлě организацисемпе общчěствăсем урлă активлăн хутшăнаççě. Пирěн Осоавиахим организацисемсěр пуçне вырăнсенче РОКК, МОПР тата ытти общчěствăсемпе организацисем пур. Çав организацисемпе общчěствăсем мěнле ěçлесе пынине çутатасси çинчен пирěн хаçатсем халě аса илмеççě-ха. Ку çеç мар, пирěн физкультурăпа спорт та оборонă ěçěн пěр пайě пулса тăрать. Хаçатсен страницисенче физкультурăпа спорт: гимнастикă, волейбол, футбол, ăмăртса чупасси, сикесси, противогазпа çÿреме, пăшалпа тěл пеме вěренесси çинчен пěр строка та тупса вулаймăн.

Осоавиахим организацисен ěçěсем çинчен сайра хутра çеç пěрер заметкă пичетлесе кăларни, пирěн хаçатсем массăллă оборонă ěçне хакламаннине çирěплетнисěр пуçне хаçатсен оборонă ыйтуне çутатакан автăрсем çуккине те йар уççăн кăтартса парать. Осоавиахим, РОКК, МОПР, физкультурă организацисене йěртсе пыракансене хаçат ěçне активлăн хутшăнтармасăр, пирěн хаçатсем оборонă ěçне çутатас задачăна пурнăça кěртме пултараймаççě.

Парти пирěн хаçатсене массăллă оборонă ěçě çине тимлěн çавăрăнса пăхма хушать. Кун çинчен ПСК(б)П Чăваш облаç организацин XIX-мěш конференцийě хăйěн решенийěнче татăклă кăтарту парса хăварчě.

★ ★

Осоавиахим членне кěреççě

УЛАТĂР. Педагогикă училищинче Осоавиахим организацине члена кěрекенсен йышě кашни кун ÿсет. Çак ерне хушшинче кăна Осоавиахим членне 38 çын хутшăнчěç. Осоавиахим членěнче тăракансен йышě 123 çынна çитрě. Халě татах та 50 çын члена кěме зайавлени пачěç. Осоавиахим организацинче халě винтовкăпа тěл пеме, противогазпа усă курма тата пулемет çинчен вěрентеççě, тěнчери лару-тăрусемпе паллашаççě.

И. Клюкин.

ПСÇЛКС 20 çул тултарнă тěле

Комсомолăн программăллă докуменчěсем

Комсомол—большевиксен партийěн ачи. Ăна Ленин—Сталин партийě пăхса ÿстерсе çитěнтерне. Вăл партипе ěççынни çамрăкěсен пысăк массине çыхăнтарса тăракан организаци. Комсомол малта пыракан совет çамрăкěсен массăллă, анчах партилě мар организацийě пулса, парти çумěнче тăрать, унăн резервипе помошникě пулать. Комсомол пуçланса кайнă кунсенченех Ленин—Сталин партийě çамрăксен организацийěшěн, ашшě хăйěн ачишěн тăрăшнă пек, тăрăшса пынă, хăйěн сменине йăвăрлăхсене хирěç кěрешÿре пиçěхтерсе пынă, ăна большевикла традицисене хăнăхтарса пынă, ăна марксисла теорин çÿлěшěсем патне çěклентернě.

Большевисăм комсомола икě паллă, чăннипех те историлě пулса тăракан, документсем парса пуйанлатрě. Çак документсем вěсем—В. И Ленин РКСМ III-мěш сйесěнче каланă сăмах тата Сталин йулташ комсомолăн VIII-мěш сйесěнче каланă сăмах. Çак сăмахсем вěсем иккěшě те комсомола идейăпа теори тěлěшěнчен çÿлě пусăма хăпартрěç, çамрăксен коммунисла организацин задачěсене туллин палăртса пачěç. Çак документсем иккěшě те коммунисăмшăн кěрешнě çěрте комсомола çул кăтартса пыракан çăлтăр вырăнне, çамрăксен ленинла-сталинла сойузěн пурнăçěпе ěçěнче программă вырăнне пулса тăчěç.

* * *

РКСМ III-мěш сйесěнче каланă сăмахра Ленин çěнě общчěствăн паллисене кăтартса панă. Хальхи вăхăтра 15 çула çитнě ăру „коммунисăмла общчěствăна курать, тата çак общчěствăна вăл хăй тăвать", тесе каланă Ленин.

Коммунисăм тумашкăн пěлÿ кирлě. Пěлÿсěр, наукă çÿллěшěсене вěренсе алла илмесěр коммунисăм общчěстви тума çук. Çавăнпа та Владимир Ильич çамрăксене каланă пирвайхи сăмах—коммунисăма вěренме чěнни пулнă.

Анчах та, коммунисăма вěренес тени вăл, пěрре те марксисăмăн уйрăм положенисене пăхмасăр калама вěренессине пěлтермест. Коммунисăмăн пěтěм пěлÿвěсене ăнланса илмесěр коммунисăмлă наукăн вывăчěсене ăнланса илме çук. Мěлйунсен ăспуçне çавăрса илнě марксисăм-ленинисăм теорийě етем йăхě темиçе ěмěрсем хушши пухса пынă пěлÿсен çирěп никěсě çинче тăрать. Маркс етем общчěстви аталанăвěн саккунěсене вěренсе, çак общчěствă тунă мěнпур ěçсене критикă йěнчен пăхсе тухса тарăнăн та тěрěс научнăй анализ туни тăрăх капиталисăм хуçалăхě пурěпěрех пěтсе лармала пулассине кăтартнă, çěнě строй—коммунисăмлă строй револючилěн çуралса тухассине малтанах курса тăнă.

Ленин çамрăксене вěренÿ çине çийелтен, пурне те пěлнě пек пулса пăхасран сыхлантарнă. Хăйсене хăйсем пурне те пěлекен çын пек тыткалакансем, ěç çине çăмăлттайла пăхакан çынсем чăн-чăн коммунис пулма пултараймаççě. „Хăв тăнна етем йăхě туса хатěрленě пěтěм пěлÿсемпе пуйанлатсан анчах коммунис пулма пулать".

Марксисăм-ленинисăм етем пěлěвě çитсе тăнă чи çÿлě вырăн. Вăл пěлÿ çеç памасть, тата вăл çěнě йавленисене ăнласа илме, общчěствăна, наукăна малала йама май паракан метăд парать. Совет çамрăкěсем Ленин хушса хăварнисене асра тытса, Сталин йулташ кăтартса панисем хыççăн пырса капиталисăмлă культурă хăварнă пуйанлăхсене ăнăçулăн вěренсе пыраççě.

Пирěн культурă—мěлйунсен культури, пирěн наукă — ěçěн руководстви. Çавăнпа та, — тесе вěрентнě Ленин, — çамрăксен хăйсен вěренěвěпе воспитанин кашни утăмне" ěççыннисем експлуататăрсене хирěç кěрешнипе, социалисăм строительствин кěрешěвне хутшăннипе çыхăнтарса пымала.

Ленин Комсомолăн III-мěш сйесěнче коммунисăмла морал, коммунисăмла нравственнăç тěслěхěсене, рабочисемпе хресченсен ěçěшěн тăракан çамрăкăн сăн-сăпатне кăтартса панă. Коммунисăмла нравственнăçăн пěтěмпех рабочисен класлă кěрешěвне пăхăнса тămала, Ленин буржуалă, попла çěрěк нравственнăçăн ултавне тăрă шыв çине кăларса, çамрăк çыннăн моралě сăн-сăпатне кăтартса панă. Совет çамрăкě вăл хăйěн пěтěм вăйне ěççыннисен ěçне парать, хăйěн интересне коммунисăм кěрешěвěн интересне пăхăнтарать. Комсомолецăн, социалисăм çěршывěнчи çамрăкăн, пурнăçра (йăлара), политикăра принциплă, идейă йěнчен çирěп, морал йěнчен таса пулмала. Çакăн пек пулсан, комсомолец тăшмана, вăл темěнле маскăпа витěнсе пытанать пулсан та, хăйулăн çěмěрме пултарать.

„Çамрăксен коммунисла Сойузě, — тенě Ленин, — ударлă группă, пур ěçре те хăйěн пулăшăвне паракан, хăйěн пултарулăхне, пуçарулăхне кăтартакан ударлă группă пулмала".

Комсомол сталинла пилěкçуллăхсем тăршшěнче партин шанчăклă помошникě пулнине кăтартса пачě, халăх хушшинчи чаплă йухăма — социалисăмлă ăмăрту йухăмне пуçарса йараканни пулчě. Ку йухăм кайарахпа стахановла йухăма куçса кěчě.

Комсомол çак çитěнÿсене Ленинпа Сталин вěрентнисене пурнăça кěртнипе тунă.

* * *

Пирěн çěршыв мирлě строительствă çулěсене куçсан, парти, ленинисăм тăшманěсене хирěç вăйлăн кěрешсе, индустриализацин сталинла аслă программине пурнăça кěртсе пыма тытăнсан, комсомол теорипе политикă тěлěшěнчен пысăк вырăн йышăнса тăракан тепěр документ туйанчě. 1928 çулти майăн 18-мěшěнче Сталин йулташ ПСÇЛКС VIII-мěш сйесěнче сăмах тухса каланă. Вăл мирлě аталанăвăн лару-тăруне, пирěн строительствăри çěнě тапхăрти условисене палăртса панă. Вăл комсомолăн тěксěм йěнěсене те кăтартса панă.

Сталин йулташ çапла кăтартса панă: „Истори калать: чи пысăк çарсем те, хăйсене хăйсем мăнаçланнине пула, хăйсен вăйне ытлашши пысăка хунине пула, тăшман вăйне ытла та шута хуманнине пула, тěлěрме пуçланине пула, хăйсен паттăрлăхне çухатнине пула тата йăвăр минутсенче ăнсăртран килсе тухма панине пула пěтсе ларнă. Чи пысăк парти те, вăл истори урокěсене хисепе илмест пулсан, хăй класěн паттăрла хатěр тăрассине кунран-кун туптаса пымасть пулсан, чи пысăк парти те хăйне ăнсăртран пырса тухма, чи пысăк парти те пěтсе ларма пултарать".

Парти çулпуçě комсомол умне вирлě задачă кăларса тăратнă: рабочи класăн тăшмансене хирěç паттăрла хатěр тăрассине çěклентерсе пымала, ěççыннисен большевикла сыхăлăхне тěреклетмеле. Сталин йулташ çак задачă нумай вăхăта пыракан задачă пулмалине кăтартса панă. Çак задачă Совет Сойузěнче классем пур чухне, капиталисăмлă йěри-тавралăх пур чухне пур ěçсенче те витěр курăнса тăмала.

Сталин йулташ клас кěрешěвěн конкретлă примерěсем тăрăх (1927 çулта тырпул хатěрлевěнче пулнă йăвăрлăхсем, Шахтински ěç), социалисăм тăшманěсемпе вěсен агентури истори арени çинчен хăй ирěккěн пăрахса кайасшăн пулманнине кăтартса панă.

Питě те вирлěн илтěнсе тăраççě Сталин йулташ каланă çак сăмахсем:

„... Пирěн хамăр культурсăрлăха мухтав йурри кÿме хатěр çынсем пур. Есě хут пěлместěн пулсан, йе тěрěс мар çыратăн пулсан, хăв кайа йулнипе мухтанатăн пулсан, есě вара „станок" умне тăрса ěçлекен рабочи, сана чыс та хисеп. Есě культурсăрлăхран тухнă, хут вěреннě, наукăна вěренсе алла илнě пулсан, вара есě йут çын, „масăран" уйăрăлса кайнă, рабочи пулма пăрахнă çын. Епě шухăшлатăп: çак варвăрлăхпа тискерлěхе çунтарса кăлармасăр епěр пěр утăм та малала кайас çук. Рабочи клас культурсăрлăхран тухма пултарма пěлмесěр, вăл хăйěн интеллигенцине тума пěлмесěр, вăл наукăна вěренсе алла илмесěр çěршывăн чăн-чăн хуçи пулса тăма пултараймасть, хуçалăха наукă никěсě çинче тытса пыма пултараймасть".

ПСÇЛКС VIII-мěш сйесěнче Сталин йулташ çамрăксене наукăна вěренме, револючилě теорине вěренсе алла илме чěннě.

Çакă вăл питě пысăк ыйту пулнă. Ăна тěрěс татса панинчен пирěн строительствăн кунçулě, пирěн государствăн кунçулě килнě. Хамăрăн советла технически интеллигенцине тумала пулнă. Хăйěн интеллигенцийěсěр пěр государствă та тытăнса тăма, малала кайма пултараймасть.

„Тăвас пулсан—пěлес пулать, наукăна вěренсе çěнсе илес пулать, пěлес пулсан—вěренес пулать. Çине тăрса, чăтăмлă пулса вěренес пулать. Пуринчен те вěренмеле—тăшмансенчен те, тусcенчен те, уйрăмах тăшмансенчен вěренмеле, шăла çыртса, пирěнтен, пирěн тěттěмлěхрен, епěр кайа йулнинчен тăшмансем куласcинчен хăрамасăр вěренес пулать. Пирěн умра крепăç тăрать. Ăна, çак крепăça—наукă теççě, вăл пěлěвěн нумай хисеплě отрăçлисенчен тăрать. Пирěн çак крепăça мěнле те пулин илес пулать. Çак крепăça, çамрăксен, вěсем çěнě пурнăç строителěсем пулас теççě пулсан, вěсем чăн-чăнах вăтă гвардине улăштаракансем пулас теççě пулсан, илес пулать".

Совет çамрăкěсем Ленин—Сталин партийě йěртсе пынипе наукă крепăçне çěнтересе илчěç, çěршыв валли пур отрăçлăсем тăрăх та çамрăк специалиссем хатěрлесе пачěç. Комсомол малта пыракан револючилě наукăн работникěсене ÿстерсе çитěнтерчě. Комсомол мěлйуншар большевик-техниксем, большевик-учонăйсем пăхса çитěнтерчě.

Техникăна вěреннипе çеç çитмест, тата большевисăма вěренмеле— çапла вěрентет пире Сталин йулташ. Çак задачăна татса парас ěçре, большевисăма вěренсе алла илес кěрешÿре пирěн çамрăксем комсомолăн программăллă докуменчěсенчен—В. И. Ленин комсомолăн III-мěш сйесěнче каланă сăмахпа И. В. Сталин комсомолăн VIII-мěш сйесěнче каланă сăмахěнчен йаланах чěрě вăй илсе тăрěç. Ленинпа Сталин кăтартса панисем пирěн çамрăксене политикăпа идейă йěнчен хěçпăшаллантараççě.

Марксисла теорине вěренме ытлашши çав терийех йăвăр мар ěнтě. Вěренес кăмăл пулни çеç кирлě. Вěренме кирлě условисем пирěн пурте пур.

Халě ПСК(б)П историйěн Кěске курсě пичетленсе тухрě. Вăл пирěн партин научнăй историйě, парти политикин, диалектикăлла тата историлě материалисăмăн тěп ыйтăвěсем тăрăх енциклопеди пулса тăрать. ПСК(б)П историне вěренни пирěн интеллигенцине, пирěн кадрсене хăватлă, вăйлă хěçпăшал парать, вăл хěçпăшал тăшмана çěмěрсе тăкма пулăшать. Епěр халăх тăшманěсене хирěç хăйаррăн кěрешетпěр. Тăшмана вăхăтра тупса пěтерме пěлес пулать. Çакăн пек пулас тесен, большевиксен партийě тăшмана хирěç мěнле кěрешсе пынине, вăл марксисăм-ленинисăмăн пур йышши тăшманěсене те хирěç — народниксенчен, есерсенчен, меньшевиксенчен пуçласа фашисăмăн контрреволючилě троцкисла-бухаринла бандисене çитиччен мěнле метăдсемпе кěрешсе пынине пěлес пулать.

Револючилě теори общчěствăлла аталанăвăн саккунěсене пěлме вěрентет, малашлăха тěрěс пěлсе тăма ориентировка вăйě парать, вăл çамрăксене сыхăлăхлă пулма вěрентет, пěтěм халăха мобилизацилě хатěр тăрас лару-тăрура тытса тăма пулăшать.

Й. Левин.

Кĕрхи çĕртме планне тултармалах

Партипе правитĕлства кĕрхи çĕртме сухине вăхăтра тата пысăк пахалăхлăн туса хăварма пур майсем те туса панă. Колхозсене малта пыракан техникăпа хĕçпăшаллантарнă. Социалисăмлă уйхирсенче хаļ çĕршер трактăр ĕçлеççĕ. Йалхуçалăхĕнчи машинăсемпе ĕçлекен кадрсем те пирĕн çуллен йышланса пыраççĕ. Колхозсене кĕрхи çĕртме сухине вăхăтра тата пысăк пахалăхпе туса ирттерес пирки правитĕлства йанвар уйăхĕнчех план çирĕплетсе панă. Çаксем пурте кĕрхи çĕртме планне ăнаçлăн пурнăçа кĕртме май параççĕ. Апла пулин те, кĕрхи çĕртме сухи тăвасси республикăра чăтма çук кайа йулнă. Кĕрхи çĕртме планне тултармали пур руксем те тухнă. Хăшпĕр вырансенче çаплах кĕрхи çĕртме тума тухман колхозсем пур-ха. Йĕтĕрне районĕнчи Сарйел колхозĕ, туртăм вăйĕ çителĕклĕ пур çинчех октăберĕн 1-мĕшпе 10-мĕш хушшинче 15 гектар çеç кĕрхи çĕртме тунă. Çавăн пекех, Тури Пӳртлери—„Ударный" колхоз та (Турхан р.) халиччен виçĕ гектар çеç кĕрхи çĕртме тунă. Çавнашкал тĕслĕхсем ытти районсенче те чылай.

Октăберĕн 20-мĕшне республикĕпе кĕрхи çĕртме планне 65,5 процент çеç тултарнă. Кĕрхи çĕртме планне пĕтĕмпех тултарма тата 96.475 гектар сухаласа хăварас пулаť. Кĕрхи çĕртме планне тултарассипе Хĕрлĕ Чутай (30,1 процент), Трак (47,2 процент), Ишлей (50,8 процент), Турхан (52,6 процент) районĕсем йулса пыраççĕ. Çав районсенчи партипе совет органĕсен тата çĕрĕç пайĕсен руководитĕлĕсем партин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ йалхуçалăх çулне ăнаçлăн вĕçлесе çитересси республикăри пĕтĕм парторганизацийĕн чи кирлĕ пысăк задачăсенчен пĕри пулса тăраť, тесе хăварнине ăнланса илесшĕн мар.

Республикăра кĕрхи çĕртме планне тултарасси çавăн пек кайа йулса пыни вăл,—хуçалăхла задачăсене политикăлă ĕçсемпе çыхăнтарса пыма пĕлменнинчен килет.

Парти организацисене хуçалăх ĕçĕсенчен уйăрăлса кайма никам та ирĕк паман. Сталин йулташ парти Тĕпкомĕн февраļ-мартри пленумĕнче—политикăлă ĕçсем хуçалăх ĕçĕсенчен уйăрăлма пултараймаççĕ, тесе кăтартса панине манма йурамасť. Парти организацисен пур ĕçсемпе те оперативлă йертсе пымала. Ĕçри çитменлĕхсемпе чăрмавсене çийĕнче сирсе пыма пулăшмала. Пĕтĕм трактăрсене, лашасене кĕрхи çĕртме сухи тунă çĕрте ĕçлеттермеле. Кунпа пĕрлех, трактăриссен условине лайăхлатас пирки те тăрăшни кирлĕ. Кĕрхипе хура çĕртме сухи тунă çĕрте ĕçлекен трактăриссене ăшă тумтирсем памала, вĕсем ваļļи куллен вĕри апатçимĕçсем пулмала.

Октăберĕн 20-мĕшне республикăра кĕрхи çĕртме планне мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан сводкă (процентпа)

Улатăр	76,7
Елĕк	92,1
Патăрйел	71,2
Вăрнар	73,3
Йĕпреç	68,7
Ишлей	50,8
Канаш	55,8
Куславкка	77,6
Кувакинă	71,2
Хĕрлĕ Чутай	30,1
Сĕнтĕрвăрри	71,8
Пăрачкав	62,5
Турхан	52,6
Тутаркас	54,1
Трак	47,2
Вăрмар	54,3
Çĕрпӳ	63,7
Шупашкар	53,4
Шăмăршă	81,6
Шăхасан	70,1
Шăнкăртам	101,8
Çĕмĕрле	58,8
Йĕтĕрне	67,3
Йелчĕк	81,9
Тăвай	60,5
Чăваш АССР-пе	65,5

АСĂРХАТТАРНИ: Улатăр, Канаш, Вăрмар, Çĕрпӳ районĕсем тăрăх кĕрхи çĕртме сухи планне октăберĕн 15-мĕшне мĕн чухлĕ тултарнине кăтартнă.

Вырăс писатĕлĕсен çекцийĕ

Пирĕн республикăри вырăс писатĕлĕсене литературă ĕçне анлăрах йавăçтарса вĕсен творчĕствă пултарулăхне туллин палăртас майпа, Чăваш совет писатĕлĕсен сойузĕ çумĕнче вырăс писатĕлĕсен çекцине организациленĕ.

Октăберĕн 23-мĕшĕнче пулнă пухура çекцине йертсе пыма бӳро суйланă. Бӳро составĕнче: А. Чистяков, С. Макарăв, Ведерникăв (членсем), Н. Бусыгин тата И. Тукташ (кандидатсем).

Малашне „Красная Чувашия" хаçатра вырăс писатĕлĕсен пултарулăхне кăтартас шутпа уйăхра икĕ хут литературă страници тухса тăмала. Унта чăваш писатĕлĕсен вырăсла куçаркă произведенисене те пичетлесе пыма палăртнă.

Хĕллехи спорт çезонĕ умĕн

„Спартак" обшчĕстви хĕллехи спорт çезонне хатĕрленме тытăнчĕ. Катока тĕпренех йусаса урăхлатаť, унпа йунашар хăшпĕр çуртсене куçарса, катока сарма палăртнă. Октăбĕр ревоļуци 21 çул тултарнă уйав тĕлне каток йусавлă пулаť.

Обшчĕствă çумĕнче хĕллехи спорт ĕçен çекцине организациленĕ. Сăмахран, хоккей вăййин çекцине пĕр Шупашкар хулинче кăна 100 çын ытла çырăннă, вĕсенчен хĕрĕхĕшĕ—ачасем. Шупашкарти „Авторемонт" савăтри „Спартак" коллективĕнче хаккей çекцине 18 çын çырăннă. Халĕ Чăваш республикине Ленинградри физкуļтурă институтĕнче веренсе тухнă футбол тата хоккей тренерĕ Короļов йулташ килнĕ. Вăл халĕ заņатисене йĕркелĕ туса ирттерет.

Обшчĕствăн йĕлтĕр çекцинчи йĕлтĕрпе чи лайăх йарăнакансем: Ивановпа Филичкинă йулташсем йертсе пыраççĕ. Çекци нойаберĕн 1-мĕшĕнче ĕçлеме тытăнаť.

Физкуļтурниксене кирлĕ спорт-инвентаресене çителĕклĕ таран кӳрсе килет.

Обшчĕствăн спорт ĕçĕн календарĕнче Чăваш республикĕнчи йĕлтĕрçĕсен тата хоккеиссен командисене „Спартак" обшчĕствин ССР Сойузĕнчи Тĕп Совечĕн малти выранĕшĕн пыракан ăмăртăва хутшăнтарма палăртнă.

К. Никишов.

— О —

Малта пыракан йалпо

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Мăн Йамаш йалповĕ районра чи лайăх ĕçлекен йалпосенчен пĕри шутланаť. Кунта 8-мĕш çул ĕнтĕ Михайлăв йулташ йалпо председатĕлĕ пулса ĕçлет. Çак вăхăт хушшинче вăл лайăх ĕçлеме вĕренсе çитрĕ. Массăпа ĕçленине пула йалпо ĕçĕсем те лайăх пулса пыраççĕ.

Тырăсене уйран пухса кĕртнĕ вăхăтра кашни йалтах куçса çӳрекен лавкасем организацилерĕ. Халĕ йалпо çăмарта пухас çултаlăкláх плана 120 процент, чĕрĕ тир хатĕрлессипе 80 процент тултарчĕ. Çапла тăрăшса ĕçленипе йалпо кашни квартăлтах таварçавăрнăш планне тултарса пыраť. 3-мĕш квартăл планне 107 процент тултарчĕ.

Йалпо Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕ, лавкасенчи кашни продавец пĕр-пĕринпе социалисăмлă ăмăртăва тухрĕç. Амăртура продавецсенчен Чурпай йалĕнчи уйрăмра ĕçлекен Игнатйĕв йулташ малта пыраť. Вăл лавкана таса та куļтурлă тытаť. Таварсене вăхăтра кӳрсе килет, таварçавăрнăш планне ытлашшипех тултарса пыраť. Йалсовет çумĕнчи суту-илӳ çекцинче активлăн ĕçлет. Çак паха ĕçшĕн Игнатйĕв йулташа йалпо правленийĕ çур уйăх ĕçукçипе премилерĕ.

И. Лысăв.

— О —

Почтă ĕçĕнче йĕркесĕрлĕхсем пулмала мар

ЙĔПРЕÇ. Кăçал Хурамал почтă уйрăмне кĕрекен йалсенче хаçат-журнал сарас ĕç питех те çителĕксĕр пулса пыраť. Çуллен Хурамал йалне „Чăваш Коммунĕ" хаçат 200 екземпļар ытла килсе тăнă, халĕ почтă уйрăмне кĕрекен 6 йалсовечĕпе те 120 çеç пыраť. Ытти хаçатсемпе те çавăн пекех.

Массă хушшине хаçат сарас ĕç йапăхса кайни районри пичет сойузĕнчен тата почтă уйрăмĕнче ĕçлекенсенчен нумай килет. Почтă уйрăмĕн начаļникĕ Константинăв хаçат сарас ĕçе хакламасť. Вăл хăй те хаçат вуламанскер, ку ĕçпе интересленменнинчен нимĕн тĕлĕнмели те çук.

Кунсăр пуçне тата çырусене адрĕс тăрăх валеçес ĕçре те йĕркесĕрлĕхсем пур. Акă пĕр тĕслĕх: Корезина йалĕнче пурăнакан Надеждă Çергейăвнă Скворцовă патне ывăлĕ Хабаровскран 250 тенкĕ укçа куçарнă. Ку укçана почтă уйрăмĕнче ĕçлекенсем Хурамалти Надеждă Çергейĕвнă Гордейĕвă патне леçсе панă. Тепĕр икĕ ернерен Скворцовă йачĕпе çыру килнĕ. Çыру адрĕсне тĕрĕс çырнă пулин те ăна каллех Гордейĕвăна панă. Хурамал почтă уйрăмĕнчи работниксем çакăн пек çухалса ларни пире питех те тĕлĕнтерет.

Йĕпреçри почтă кантурĕнче те килнĕ çырусене почтă уйрăмĕсем тăрăх тĕрĕс валеçмеççĕ. Мăрат йе Çĕнĕ Чураш почтă уйрăмĕсене йамали çырусене Хурамал почтă уйрăмне йараççĕ.

В. Андрейĕв.



В. Климашин художник плакачĕ, „Искусство" издатĕлстви кăларнă. („Преосвĕще").

Библиотекăсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмала

Шăхасан районĕнчи йалсоветсен çумĕнче кашнинчех вулав çурчĕсем пур. Районра мĕнпурĕ 24 вулав çурчĕ. Анчах, йĕркелĕрех ĕçлесе пыраканнисем иккĕ çеç темеле, вĕсем Авăспӳрт Кипечпе Атнашри вулав çурчĕсем. Ку вулав çурчĕсенчен илемлĕ литературă тата йалхуçалăх йĕнĕпе кирлĕ кĕнекесем чылайах илсе вулама пулаť. Ытти 22 вулав çурчĕсен библиотекисем питĕ чухăн. Вĕсенче кĕнекесем сахал, чи нумаййи те 200 кĕнекерен ытла мар. Вĕсем те кивелсе, çĕтĕлсе пĕтнĕ. Уйрăмăнах Маркс, Енгĕļс, Ленин, Сталин çырнă кĕнекесем вулав çурчĕсенче питĕ сахал, хăшпĕр çĕрте вуçех те çук. Йулашки вăхăтра тухнă çĕнĕ кĕнекесем, партипе правитĕлствă решенийĕсем, Сталин йулташăн сăмахĕсене пичетленĕ кĕнекесем вулав çурчĕсенче сахал.

Вулав çурчĕсем ваļļи çĕнĕ кĕнекесем илмеççĕ. Йалсоветсен бӳджечĕсем тăрăх 1938 çулта вулав çурчĕсем ваļļи кĕнекесем илме 6604 тенкĕ укçа уйăрнă. Малтанхи çур çулта çав шутран 17,2 процент çеç расхутланă. Уйăрнă укçапа усă курманнишĕн йалсоветсем айăплă.

Библиотекăсенче кĕнекесем нумай çухалса пĕтеççĕ. Ку вулав çурт пуçлăхĕсенчен килет. Вĕсем кĕнекесене вулама панă чух хут таткисем çине çеç çырса йулаççĕ. Вăл хут таткисем ăçта килчĕ унта çухалса пĕтеççĕ. Кунсăр пуçне тата вулав çурчĕн пуçлăхĕсем часчасах улшăнаççĕ. Çакăн пек чух инвентарсене парса-илесси çийелтен пулса иртет. Вăл ĕçе вулав çурчĕн пуçлăхĕсем хăйсем çеç, йалсовет представитĕлĕсемсĕр туса иртереççĕ. Çапла вара инвентарсемшĕн ответлăх пĕтет. Йалсоветсемпе райçутĕç пайĕ вулав çурчĕсене вăхăтра тĕрĕслемеççĕ. Хăшпĕр вулав çурчĕсенче инвентар кĕнеки те çук.

Районра 39 шкул. Кашни шкултах библиотекă пур. Анчах шкул библиотекисем те, Шăхасанти вăтам шкулсăр пуçне, çавнашкалах чухăн. Хăшпĕр шкулсенче (Атнаш) кĕçĕн çулхи ача-пăча кĕнекисем çеç, хăшпĕрисенче пачах урăхла—(Туçи Çармăс) çитĕннисене вуламалли кĕнекесем пур, ачасем ваļļи çук. Маркс, Енгĕļс, Ленин, Сталин çырнă кĕнекесем шкулти библиотекăсенче питĕ сахал.

Библиотекă ĕçне колхозенче те йĕркелемен. 1938 çул ваļļи районри пĕр колхоз та кĕнекесем илме куļтфондран укçа уйăрман. Вăл укçана 1939 çул ваļļи те уйăрма никам та шухăшламасť. ПСÇЛКС райкомĕ, комсомолăн пуçламĕш организацисем библиотекă ĕçне мансах кайнă.

Совет халăхĕн куļтурлăхĕ, политикăлă активлăхĕ, политикăна вĕренес туртăмĕ ӳссех пыраť. Йалти массă, совет работникĕсем марксисăм-ленинисăма, ССРС историне вĕренесшĕн. ПСК(б)П историн Кĕске курсĕ пичетленсе тухнăранпа ăна вĕренес хастарлăх пысăккăн ӳсет. Политикăлă вĕренĕве тивĕçлĕ пек йĕркелесе пырас тесен чи малтанах учебниксем—Маркс, Енгĕļс, Ленин, Сталин çырнă кĕнекесем çителĕклĕ кирлĕ. Ăçта пулмала вăл кĕнекесем? Паллах, вулав çурчĕсенче, шкул йе колхоз библиотекисенче. Çавăнпа халĕ парти, комсомол, профсойуз организацисен, райçутĕç пайĕн, райçĕрĕç пайĕн, йалсоветсен, районри библиотекăсенче мĕнле кĕнекесем пуррине тĕрĕслесе, хăш библиотекă ваļļи мĕнле кĕнекесем илмелине палăртмала. Кĕнеке илме бӳджет тăрăх панă укçапа пĕтĕмĕшпех усă курмала. 1939 çул ваļļи кашни колхозăн куļтфондран кĕнеке илме укçа уйăрмала.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн куļтпросвет пайĕн те çак библиотекă ыйтăвĕ çине хытă çавăрăнса пăхмала.

С. Соколов.

★ ★

„Игăрь полкĕ çинчен хунă йурă"

Мускаври литературă музейĕнче вырăссен авалхи епăсла произведенийĕ—„Игăрь полкĕ çинчен хунă йурă" 750 çул тултарнă йатпа выставкă йĕркеленĕ. Вăл виçĕ пӳлĕм йышăнаť.

„Словăн" тексти, унăн историйĕ, ун çинчен учонăйсем, литературсем, профессăрсем, академиксем, сăнавçăсем çырнисем тата ескизсем, ӳкерчĕксем, гравӳрăсем курма пыракансене çав тери интереслентереççĕ. Унта „Слово" изданийĕсем пурте пур.

Акă пĕрремĕш издани. „Героическая повесть о походе на половцев удельного князя Новгород—Северского Игоря Святославича, писанная старинным русским языком в исходе XII-столетия, с переложением на употребляемое ноне наречие" тесе çырнă унăн хуплашки çине.

Мусин-Пушкин 1795 çулта çак алçырăвне тупнă, ăна 1800 çулта пичетлесе кăларнă.

„Словăн" тĕп шухăшĕ, идейĕ—вăл славйан кņаçĕсене пĕрле пухăнса, вырăс çĕрĕ çине тапăнакан тăшмансене хирĕç тухмашкăн чĕнни, вырăс кņаçĕсене пĕрле пухăнса вăйлă патшалăх, никам çĕнтерейми, тапăнайми вăйлă патшалăхшăн кĕрешме чĕнни, пур вырăс халăхĕ патне патриотлă чĕнӳ йани.

Выставкă „Игăрь полкĕ çинчен хунă йурăна" çырнă вăхăтри тапхăра лайăх ăнлантараť: кунта Руçăн картти, авалхи браслетсем, художĕствăлă ерешлӳсем, колļчугăсем, ĕмĕрсем витĕр тухнă колļчугăсем т. ыт. те пур.

Çавăнтах Васнецовăн „После побоища Игоря с половцами" йатлă паллă картини, академик Фаворскин гравӳрисем, Голиков художникăн ӳкерчĕкĕсем т. ыт. те пур.

Ив. Давыдăв.

Уйав тĕлне

Шупашкарти строитĕлствăра ĕçлекен çамрăксем Октăберти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултаракан уйава тата комсомол XX çул тултаракан уйава кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Драмкружок спектакļ лартма хатĕрленет, охранниксем çĕнĕ йурăсем вĕренеççĕ.

Уйав тĕлне çĕнĕ клуб туса çитереççĕ.

В. Дмитрийĕв.

Пирĕн календар

ЖОРЖ БИЗЕ

Иртнĕ ĕмĕрти музыкăлă драмăнчи аслă маçтăрĕсенчен пĕри Жорж Бизе çуралнăранпа 100 çул çитрĕ, —вăл 1838 çулта октăберĕн 25-мĕшĕнче Париж хулинче çуралнă. Çак аслă композитăр пуринчен ытла хăйĕн çав тери лайăх „Кармен" опĕрипе музыкă тĕнчинче вилĕмсĕр йат илсе йулма пултарнă.

Бизе, йурлама вĕрентекен преподаватĕл çемйинче çуралнăскер, çамрăклах музыкăна хăнăхнă, музыкăпа çав тери интересленнĕ. Тăхăр çула çитсессĕнех вăл Париж хулинчи консерваторине вĕренме кĕрет. Ана вĕрентекен преподаватĕлсенчен пĕри—„Фауст", „Ромео и Джульета" т. ыт. опĕрăсен паллă автăрĕ Гуно пулнă. Çамрăк Бизен пултарулăхĕ консерваторинчех сисĕннĕ. Программăри предметсене хăвăрттăн ăнланса илнипе вăл, çав предметсене тĕплĕн сӳтсе-йавма пĕлнипе преподаватĕлсене те сахал мар тĕлĕнтернĕ. Пурте ăна мухтанă. Хăйĕн пĕлӳлĕхне пит те тăрăшса ӳстерсе пынă май Бизе часах музыкантсен малти ретне тухса тăнă.

Консерваторине кăнтăр йенчи сăнлăхсемпе пуйанлатас шутпа Итали тăрăх çулçӳреме кайнă. Кăнтăрăн хĕмлĕ хĕвелĕ, уçă сывлăш, калама çук капăр çутçанталăк унăн пĕтĕм пурнăçĕнчи ĕçĕсенче паллă вырăн йышăнса йулнă. Унтах вăл аслă композитăрсем Россини тата Верди çырнă опĕрăсемпе тĕплĕн паллашнă.

Кăнтăртан таврăннă хыççăн Бизе каллех Париж хулинче пурăнма пуçлаť. Педагогикă тĕлĕшпе ĕçлет вăл. Кĕнекесем питĕ те нумай вулаť. Историпе, литературăпа, философипе интересленет. „Пурăнатăп епĕ, — тенĕ вăл, — пурне те пĕлесшĕн хыпса çунатăп, пурне те пĕлесшĕн çунакан кăмăлăма тăрантараймасăрах вилетĕп".

„Дон Прокопио" — Жорж Бизе çырнă чи малтанхи опĕрă. Ăна вăл 1859 çулта çырнă. Çак малтанхи ĕçĕнчех унăн пысăк таланчĕ палăрнă. 1863 çулта вăл „Искатели жемчуга", 1867 çулта „Пертская красавица" опĕрăсене; 1872 çулта „Джамиле" опĕрă тата „Арлезианка" драмă ваļļи музыкă çыраť. 1874 çул аслă композитăр творчĕствин чи ăнăçулă та тухăçлă çулĕ пулса тăраť. Ку çулхине вăл оркестр ваļļи увертӳрă, фортопианăпа выļама 12 пйесă çыраť.

Çак çулхинех Бизе хăйĕн чаплăран та чаплă, вилĕмсĕр „Кармен" опĕрăна çырас ĕçе пуçăнаť.

„Кармен" опĕрă ваļļи илнĕ либреттăн историйĕ питĕ интереслă. 1841 çулта англичанин Джрдж Борроу „Цинкали или описание испанских цыган" йатлă кĕнеке кăларнă пулнă. „Цинкали"—çапла йат панă хăйсене Испанире пурăнакан цыгансем. Кĕнеке автăрĕ çак цыгансен хушшинче чылай вăхăт пурăнса ирттернĕ. Цыгансен чĕлхине, йăлисене, йуррисене вĕреннĕ. Йулашкинчен автăр, цыгансемпе çав тери интересленсе каннăскер, Мускав таврашĕнче пурнакан цыгансем патне те килнĕ: вĕсен тăван чĕлхипе калаçнă, йуррисене итленĕ, хăй те пĕрлех йурланă. Борроу кĕнеки пурнăçри йăласене тĕплĕн сăнаса çырнă кĕнекесенчен пĕри пулса тăраť. Çак кĕнеке тăрăх усă курса французсен писатĕлĕ Проспер Мериме хăйĕн „Кармен" йатлă повĕçне çырнă. Повĕç 1845 çулта пичетленсе тухнă.

Повĕç автăрĕ Кармен йатлă хĕрĕн историне Испани тăрăх çулçӳренĕ чухне илтсе пĕлнĕ. Анчах темшĕн автăр ăна цыганкă тунă, чăннипех Кармен — испанкă. Повĕçре вăл хĕре йуратакан Хосе йатлă ача — баск. Жорж Бизе хăйĕн опĕрине çырнă чух ăна улăштарса испанĕц тунă.

Бизе ку опĕрă çинче икĕ çул ĕçленĕ. Опĕрăна çырса пĕтерсе çулах, 1875 çулти ийунĕн 3-мĕшĕнче вилнĕ.

Аслă композитăр хăй нумай палăртса хунă татах та пысăк ĕççене (çав шутрах „Иван Грозный" опĕрă) туса пĕтерме ĕлкĕреймен. Çавăн пекех вăл хăй пурăннă вăхăтри чи аслă событи пулса тăнă Париж коммунĕпе унăн дейатĕлĕсем çине мĕнле пăхни çинчен те татăклă сăмах каласа хăвараймаň. Анчах хăйĕн пĕтĕм етемлĕхĕшĕн йурăхлă, тулли чăнлăхпа йалкăшса тăракан искусствинче Париж коммунĕн идейипе килĕшнине усăллă кăтартнă. Унăн пархатарлă ĕçĕсенче пурнăçри чăнлăхшăн, тĕрĕслĕхшĕн кĕрешни, тăван çĕршыва хĕрӳлĕн йуратни чи малти вырăна йышăнаť. Ахаļтен мар ĕнтĕ Бизен генилĕ творчĕствине пĕтĕм халăх хисепе хураť, йуратса ырлаť.

★ ★

Химилĕ ăмăрту

Куславкка районĕнче Осоавиахимăн пуçламĕш организацисенче Пĕтĕм Сойузри химилĕ ăмăртăва хатĕрленесси çинчен калаçусемпе докладсем туса ирттернĕ.

Химилĕ ăмăрту чи малтан бавк уйрăмĕнче ĕçлекенсем хушшинче пулса иртнĕ. Вĕсем, 14 çын, противогазпа 5 километр хушши тухнă. Тĕрлемесри „Коммунар" колхозра ăмăрту пит те аван иртнĕ. Унта Осоавиахим членĕсем 56 çын хутшăннă.

Кун пек ăмăртусем Йелчĕкре, Куславккари хапрăк-савăт шкулĕнче—пĕтĕмпе 8 çĕрте пулса иртнĕ.

Н. Анисимăв.

Пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен доклад

Нумай пулмасť Сĕнтĕрвăрринчи çĕрйĕркелӳпе мелиораци техникумĕнче преподаватĕл Н. В. Шигильчев пĕтĕм тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх доклад туса пачĕ. Студентсем доклада хавасланса итлерĕç.

П. Дмитрийĕв.

Пĕлтерни

Октăберĕн 27-мĕшĕнче, Шупашкар хулинче, каçхине 7 сехетре Государствă академи театрĕнче мĕнпур профсойузсен активĕн республикăри канашлăвĕ пулаť.

КУН ЙĔРКИ:

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Шупашкарти „Промкоопстрой" ертел çуртсемпе хватерсене шуратас, çыпăçтарас, сăрлас тĕлĕшпе, платник-стоļар ĕçĕсем тĕлĕшпе, кăмакасене, килте тыткалакан тимĕр-шăвăç йапаласене йусас тĕлĕшпе организацисенчен те, уйрăм çынсенчен те кирлĕ таранах

ЗАКАЗСЕМ ЙЫШĂНАŤ.

Заказсене 9 сехетрен пуçласа 16 сехетчен ертел кантурне памала.

Адрес: ул. Карла Маркса, д. № 15, телефон 4—57.

2—1

„РОССНАБСБЫТĂН"

Чăваш уйрăмĕ пур клийентсене те çакна пĕлтерет:

унăн склачĕсем, инвентаризаци тунă пирки, çак çулхи октăберĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа нойаберĕн 1-мĕшĕччен хупă пулаççĕ. Вăл кунсенче

складсенчен тавар памаççĕ.

2—1

Шупашкарти макарон хапрăкне йалан ĕçлеме

Аслă бухгалтĕр, счетовод-картотетчик, аслă механик (аслă механик инженер пулсан аван)

КИРЛĔ.

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

АДРĔС: Урицкий урамĕ, 25-мĕш номĕрлĕ çурт.

„Росснабсбытăн" транспăрт кантурне пысăк ăсталăхлă

БУХГАЛТĔР-ТАКСИРОВШЧИК КИРЛĔ.

„СОЙУЗУТИЛĔН"

Чăвашкантурне йаланлăха ĕçлеме

гараж заведуйушчийĕ-механик

ТАТА

управделами-машинисткă

КИРЛĔ.

Адрес: г. Чебоксары ул. Ленина д. № 1, „Союзутиль".

„ЗАГОТЗЕРНОН"

Шупашкарти хатĕрлев пунктне

БУХГАЛТĔРСЕМ

ТАТА

КАРТОТЕТЧИЦĂ КИРЛĔ.

Адрес: Нагорная улица, Одностороннь пункт „Заготзерно".

3—1

Государствăлă, кооперативлă тата хуçалăхлă организацисене

ПĔЛСЕ ТĂМА

Кăçалхи нойаберĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Шупашкар пристанĕ грузсене пристаņри хĕллехи складсенче нумай руклăха сыхласа усрас тĕлĕшпе догăвăрсем тăваť. Догăвăр тăвас пулсан шыв çулĕ хупăниччен кантура, 483-мĕш дебаркадере пымала, шыв çулĕ хупăннă хыççăн — Кадыков урамĕнчи 22-мĕш №-лĕ çурта пымала.

„ЧĂВАШ КОММУНĔ" ÇЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ ПĔР УЙĂХА 2 Т. 50 ПУС. 3 УЙĂХА 7 Т. 50 П., 6 УЙĂХА 15 Т., ÇУЛТАЛĂКА 30 ТЕНКĔ, ПОДПИСКĂНА ÇЫХĂНУ УЙРĂМĔСЕМ, ПИÇМОНОÇЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 551. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793.ф. 6. 58 × 84 п. л.